24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 ЯНВАРЬ 25 ВЫРСАРНИКУН 21 (6046) №

# Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

# ЛЕНИН ЯЛАВĔПЕ

## В. И. ЛЕНИН вилни XVIII çул тултарнă ятпа 1942 çулти январĕн 21-мĕшĕнче пулнă траурлă-чаплă ларура А. С. ЩЕРБАКОВ юлташ тунă доклад

Юлташсем! Паян эпир пирĕн партие тата совет государствине туса хунă аслă Ленин вилни XVIII çул тултарнине палăртатпăр. Ленин вилнине асăннă кун пирĕн парти тата ĕçсынисем хăйсен ĕçĕн итогĕсене, хамăрăн çулпуç тата учитель хушса хăварнисене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешнин итогĕсене пĕтĕçтереççĕ. Кăçалхи çул эпир çак куна совет халăхĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç — пирĕн тăван çĕршывăн чи тискер тăшманĕсене хирĕç отечественнăй вăрçă тусаттынă условисенче палăртатпăр.

7 уйăх каярах нимĕç империалисчĕсем пирĕн çĕршыв çине çавтери пысăк çар машинине кĕртсе ячĕç, Совет Союзĕнчи мирлĕ хуласемпе ялсем çине хăйсен темиçе миллион çынран тăракан çарне, танкĕсемпе, тупăсемпе, самолетсемпе тата çар техникин кучухнехи ытти хатĕрĕсемпе пуç тăпăнчен пуçласа ура тупанне çитиччен хĕçпăшалланнă çарне кĕртсе ячĕç. Гитлерла вăрă-хурахсем пирĕн халăха, пирĕн государствăна пĕтерсе тăкма, рабочисемпе хресченсене, ССР Союзĕнчи мĕнпур ĕçсынисемпе мĕнпур нацисене нимĕç капиталисчĕсемпе помещикĕсен пусмăрĕ айĕнче асапланакан чурасем туса хума ĕмĕтленеççĕ.

Пирĕн совет государствин иртнĕ çулта чи хаяр испытани тӳсе ирттерме лекрĕ.

Пирĕн тăван çĕршыв умне питех те пысăк хăрушлăх тухса тăнă кунсенче совет халăхĕ, пирĕн парти тата хамăрăн çулпуç Сталин юлташ ертсе пынипе, хамăрăн мĕнпур çĕршыва гитлерла тискер кайăксем хаяррăн хĕссе килнине хирĕç тăма пултаракан, кирек мĕнле йывăрлăхсемпе инкек-синкексене те тӳсе ирттерме хатĕр тăракан пĕрлĕхлĕ боевой лагерь туса хумашкăн çителĕклĕ таранах вăй-хăват тупрĕ. Пирĕн халăх çав хаяр испытание чыслăн тӳсе ирттерчĕ тесе калама пулать.

Совет çĕршывĕн тылĕ тăшманăн йыткĕтĕвĕсене унăн техникине геройла пĕтерсе пыракан хăйĕн Хĕрлĕ Çарне тивĕçлĕ пулчĕ. Пирĕн халăх шикленсе ӳкмерĕ, сухалса каймарĕ.

Ленинпа Сталин туса хунă совет строй тĕнчере чи çирĕп строй пулни курăнчĕ, вăрçă пынă вăхăтра совет строй вара татах та ытларах пиçĕхсе тĕреклене. Çакă вăл ĕнтĕ, пирĕн парти, аслă Сталин ертсе пынипе, аслă Ленин хушса хăварнисене малтан пуçласа вĕçне çитиччен пĕр пăркаланмасăр çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пынине чи ĕненмелле çирĕплетсе пани пулать.

* * *

Промышленноçăр тата чи малтан йывăр индустрисĕр халхи вăхăтра вăрçă вăрçма тата, кунтан та ытларах, вăрçăра çĕнтерме май çук. Кучухнехи вăрçă пуринчен ытларах моторсен вăрçи пулса тăрать. Моторсем — сывлăшра, моторсем — çĕр çинче. Моторсемсĕр самолетсемпе танксем, автомашинăсемпе карапсем çук. Кĕскен каласан, моторсемсĕр кучухнехи çарпа флот çук. Моторсем туса кăларас пултарулăх халĕ хăйĕн тăван çĕршывне хӳтĕлеме, кирек мĕнле тăшмана хирĕç те кĕрешме хатĕр тăнине кăтартса парать. Кам моторсем туса кăларас тĕлĕшпе маларах тăрать, вăрçăра çавă çĕнтерет. Моторсем туса кăларас пултарулăх, çакăнпа пĕрлех, çĕршыв промышленность аталанăвĕ тĕлĕшпе мĕнле виçере тăнине кăтартса парать.

Çакна ăна Ленинпа Сталин совет государствине тума тытăннă малтанхи кунсенчех витĕр курса пĕлсе тăнă. Вĕсем, малашнехине генилле курса тăракан ăс-хакăл улăпĕсем, нумай çул каярах граждан вăрçипе интервенцисен фрончĕсем витĕр, блокадăпа арканусем витĕр, выçлăхпа инкек-синкексем витĕр паянхи куна курма кăна мар пултарнă, вĕсем, çакăнпа пĕрлех, пирĕн çĕршывпа халăха кĕрешĕве, испытанисем тӳссе ирттерме, çĕнтерӳ тума хатĕрлеменшкĕн те пĕлнĕ.

Электрификацисĕр, йывăр индустрисĕр пирĕн государство пĕтме пултарасси çинчен Ленин партипе ĕçсынисене нумай хутчен асăрхаттарнă, çавăн пек пулса тăма парас мар тесе, вăл пире социализмлă индустриализаци политикине пурнăçа кĕртсе пыма хушса хăварнă.

Социализмлă индустриализацин ленинла-сталинла политики пирĕн партипе совет правительствин генеральнăй линийĕ пулса тăчĕ. Эпир чăннипех те улăпла ĕçсем туса ирттертĕмĕр. Хамăрăн вĕçĕ-хĕррисĕр аслă çĕршывăн мĕнпур кĕтессисенче эпир пиншер те пиншер çĕнĕ предприятисем туса лартрăмăр. Индустрин уйрăм отраслĕсене пĕтĕмпех çĕнĕрен турăмăр. Машинăсем, станоксем, автомобильсем туса кăларакан çĕнĕ заводсем, хими, металлурги, авиаци заводĕсем, тупăсем, снарядсем, танксем, пăшалсем тата ытти тĕрлĕ хатĕрсем туса кăларакан çĕнĕ заводсем туса лартрăмăр. Çавсем вĕсем халĕ питех те кирлĕ пулса тăчĕç тата вĕсем хăйсен результачĕсене параççĕ.

Малта тăракан хăватлă промышленноçа мĕнле пулсан та туса çитерессишĕн партипе совет правительстви вăйсене те, средствăсене те хĕрхенмен, пур çĕрте те, пур ялалана та хĕссе перекетлесе тыткалама тăрăшнă. Эпир çавăн пек хăватлă промышленноçа туса хутăмăр, çав промышленность Хĕрлĕ Çара кучухнехи боевой техникăн пур тĕрлĕ хатĕрĕсемпе те хĕçпăшаллантармалăн база, пирĕн çĕршыв оборонин бази пулса тăчĕ.

«Вăйсăр та оборонăна хатĕр мар çĕршывран Совет Союзĕ оборонăллă пултарулăх тĕлĕшпе хăватлă çĕршыв, ăнсăртран килсе тухакан кирек мĕнле инкек-синкеке те кĕтсе илме хатĕр тăракан çĕршыв, оборонăн кучухнехи хатĕрĕсене массăллă хисеппе туса кăларма тата, тулашран килсе тапăнас пулсан, хăйĕн çарне çав хатĕрсене çителĕклĕ пама пултаракан çĕршыв пулса тăчĕ» (СТАЛИН).

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçăра пирĕн тăван çĕршыва халĕ çав политика çăлса пырать те ĕнтĕ.

Германи империалисчĕсем нумай çулсем хушши вăрçа хатĕрленнĕ тата хĕçпăшал туса кăларас тесе хăйсен промышленноçĕпе мĕн вăй çитнĕ таранах усă курнă. Вĕсем Хĕвеланăçĕнчи Европăн нумайрахĕш пайне çаратса пĕтернĕ тата хăйсемшĕн Чехословакири, Польшăри, Бельгири, Голландири, Италири, Францири тата ытти çĕршывсенчи промышленноçсене ĕçлеттернĕ. Германи империализмĕ çавтери пысăк çар машинине пĕтĕмпех ĕçе ярса, çав çар машинин мĕнпур йывăрăшĕпе Хĕрлĕ Çар çине килсе ывтăнчĕ.

Гитлеровецсем ĕçе питех те çăмăллăн татма шутланă. Танксемпе самолетсем ытларах пухса, вĕсем пирĕн Хĕрлĕ Çара уйăх çурă е икĕ уйăх хушшинче çапса аркатма, пирĕн промышленность районĕсене тытса илме, Урал патне çитме, Совет Союзне чĕркуççи çине тăратма, Совет Союзĕнче пурăнакан халăхсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтерме, тепĕр пайне вара нимĕç баронĕсен, киввисен те, çавăн пекех çĕннисен те, ĕмĕрлĕх чурисем туса хума ĕмĕтленнĕ.

Анчах та нимĕç захватчикĕсен вăрă-хурахла çарĕ кучухнехи вăрçă техникипе лайăх хĕçпăшалланнă совет войскисем геройла хирĕç тăни çине пырса тăрăнчĕ. Нимĕç захватчикĕсем Хĕрлĕ Çарăн вăйĕсене хакламасăр тăрса, Хĕрлĕ Çара пĕрре пырса çапсах ӳпĕнтерсе хума тата сапаласа яма ĕмĕтленсе йăнăшмаллипех йăнăшрĕç. Çакна вĕсем халĕ хăйсем те йышăнаççĕ.

Тăшман пирĕн çĕршывăн промышленноçлă хăшпĕр районĕсене — Днепропетровска, Кривой Рога, Харькова, Донбасăн пĕр пайне тытса илме пултарчĕ. Çав районсене оккупациленĕ май гитлерла суйăлтисем Совет Союзĕн çар промышленноçне тытса илнĕ тесе калакан халлапа сараççĕ. Фашистсем мĕн шухăшласа каларни тĕлĕшпе мар, чăнчăн фактсене шута илсе пăхсан, çакна каламалла:

Пĕрремĕшĕнчен, сталинла пятилеткăсен çулĕсенче туса çитентернĕ Совет Союзĕн шултăра промышленноçĕ, уйрăмах çар промышленноçĕ, пĕр-пĕр уйрăм районра мар, пĕтĕм çĕршыв тăрăх вырнаçса тухнă.

Иккĕмĕшĕнчен, нимĕçсем вăхăтлăха оккупацилеме пултарнă районсенче те вĕсем шултăра промышленноçăн предприятийĕсене тытса илеймерĕç, мĕншĕн тесен çав районсенчи промышленноçăн тĕп предприятийĕсене вăхăтрах эвакуацилесе тылăн инçетри районĕсене куçарнă. Халхи вăхăтра çав предприятисенчен нумайĕшĕсем ĕçлеме тытăннă та ĕнтĕ, вĕсем фронт валли ытларах та ытларах продукци парса тăраççĕ. Çапла ĕнтĕ, нимĕçсем советăн ниепле промышленноçне те тытса илмен, тытса илме те пултарайман.

Пирĕн промышленность халĕ хăйĕн ĕçне урăхлатса çĕнетсе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ĕçлеме пуçларĕ. Вăл халĕ Хĕрлĕ Çар валли танксем, самолетсем, боеприпассем, орудисем, автоматсем тата ытти тĕрлĕ çар техники ытларах та ытларах туса кăларать.

Анчах та фронт пирĕнтен татах та ытларах ыйтать. Пирĕн танксем тĕлĕшпе, хăшпĕр йышши самолетсем тĕлĕшпе те, хамăрăн çартан вăйлăрах тăшмана хирĕç кĕрешме лекнине манма кирлĕ мар. Тăшмана пĕтĕмпех çĕнтерес тесен, пирĕн танксен, самолетсен тата вĕсене хирĕç кĕрешмелли средствăсен хисепĕ тăшмананнинчен ытларах пулмалла. Эпир çак задачăна татса пама пултаратпăр тата ăна татса памалла та.

Пирĕн промышленноçăн резервĕсем пысăк. Ылханлă та хаяр тăшмана — нимĕç оккупанчĕсене нимĕн хăвармиччен çĕмĕрсе тăкма фронтра çар валли мĕн кирлине пурне те туса парас тесен, миллионшар совет патриочĕсен ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле.

Пирĕн тăван çĕршыв ирĕклĕ ĕçсынисен, рабочисемпе хресченсен тата ĕç интеллигенцийĕн çĕршывĕ, эксплоататорсемпе эксплоатацилекенсемсĕр, капиталистсемсĕр, помещиксемсĕр çĕршыв пулса тăрать. Рабочисемпе хресченсен çирĕп союзĕ, çак классен союзĕ ĕç интеллигенцийĕпе пĕтĕçсе çирĕплени пирĕн совет обществин аталанăвĕпе ырă пурнăçĕн никĕсĕ пулса тăрать.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем пирĕн çĕршыв çине тапăнса, вĕсем Совет Союзĕн çĕрĕсем çине çĕмĕрсе кĕрсенех рабочисемпе хресченсем тата интеллигенци хушшинче хирĕçӳсем пуçланса каяççĕ, тесе шутланă. Гитлеровецсен çак ĕмĕчĕсем те, вĕсен ытти ухмахла ĕмĕчĕсем пекех, арканса кайрĕç. Совет строй, унăн тăшманĕсем шутланинчен чылай çирĕпрех пулни курăнчĕ.

Ленин юлташ партие рабочисемпе хресченсен союзне мĕнпур вăйпа çирĕплетсе пыма хушса хăварнă. Ленин хушнине пурнăçа кĕртсе пырса, партипе совет правительстви рабочисемпе хресченсен союзне ĕмĕр арканмалла мар çирĕплетес ыйтăва колхоз стройĕ çеç ăнăçлăн татса пама пултарнине асра тытса, колхозсемпе совхозсем турĕç. Рабочисемпе интеллигенци хресченсене çак ĕçре пулăшса пычĕç. Пирĕн çĕршывра колхоз стройĕ çĕнтерчĕ, хресченсем, колхоз стройне пула чăнчăн этем евĕрлĕ пурăнма тытăннăскерсем, çак çултан ĕмĕрне те пăрăнса каяс çук, çак çĕнĕ пурнăçшăн, Ленин ертсе пынипе, Сталин ертсе пынипе çапăçусенче çĕнтерсе илнĕ пурнăçшăн, вĕсем виличченех çапăçма хатĕр.

Нимĕç захватчикĕсем пирĕн çĕршывра капитализма каялла таварасшăн, рабочисемпе хресченсене пусмăрлăха кĕртсе ӳкересшĕн, пирĕн нумай нацилĕ ĕç интеллигенцине пусарса лартса, интеллигентсенчен нимĕçсен фашистланнă интеллигенцийĕ патĕнче тарçăра çӳрекен çынсем туса хурасшăн. Нимĕç захватчикĕсем пирĕн хресченсенчен колхозсене туртса илме, вĕсен тырпулне илсе тухса кайма, хресченсем тар юхтарса ĕçлесе çемçетнĕ çĕре туртса илсе, ăна нимĕç кулакĕсемпе помещик-баронĕсене валеçсе пама ĕмĕтленеççĕ. Нимĕçсен командованийĕ пирĕн хресченсен çĕрĕсене тытса илме шухăшлать, вăрçă пĕтнĕ хыççăн вара Украинăри, Белоруссири çав çĕрсене хăйĕн офицерĕсене валеçсе пама, пирĕн хресченсене çав тин çеç пиçсе тухнă баронсен-помещиксен чурисем туса хума шутлать. Çавă вăл нихăçан та пулас çук! **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).** Пирĕн Совет çĕршывĕнче фашистсен çавăн пек йĕркисем нихăçан та пулас çук. Пирĕн хресченсене, колхозри пуян пурнăçан тата ирĕклĕ ĕçĕн хаваслăхне курнăскерсене, никам та чура туса хураймĕ! **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

* * *

Совет Союзĕ рабочисемпе хресченсен нумай нацилле государстви пулса тăрать.

Ленин хушса хăварнисене пурнăçа кĕртсе пырса, парти советлă республикăсен Союзне кĕрекен халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетрĕ. ССР Союзĕнчи халăхсем пĕр-пĕрне пулăшса пырса, хăйсен государствине туса çирĕплетрĕç. Çынсене расăсемпе нацисем тăрăх уйăрса танмарлатнине Ленинла-Сталинла наци политики пăрахăçа кăларса пĕтерет. Октябрьти революци хыççăн партипе совет правительстви тытса пынă, хăйсен мĕнпур политикипе пирĕн халăхсем хушшинче танмарлăх çуккине тата пулма та пултарайманнине, пирĕн аслă раса та, кĕçĕн раса та çуккине кăтартса пачĕç. Пирĕн пур халăхсем те пĕр пек правăсемпе усă кураççĕ. ССР Союзĕнчи халăхсем хушшинчи туслăх совет государствин çавтери аслă çĕнтерӳвĕ пулса тăрать.

Пирĕн çĕршыва хирĕç захватчикла вăрçă пуçланă чухне нимĕç фашисчĕсем ССР Союзĕнчи халăхсем хушшинче харкашу-çапăçу пуçланасси çине шанса тăнă. Хăйсен тăмсайлăхне пула вĕсем çапла шутланă: пĕрре хыттăн пырса çапнă хыççăнах ССР Союзĕнчи халăхсем хушшинче çапăçу пуçланса каять те çĕршыв вара уйрăм пайсене ваклана пĕтет, тенĕ. Çакăнта гитлеровецсем хăйсен мухтавсăр опытне шута илнĕ. Вĕсем Хĕвеланăçĕнчи Европăн чылай пысăк пайĕнче çарпа каторга тĕрми туса хучĕç. Вĕсем халăхсен прависене пĕтерсе тăкма хăнăхнă.

Фашистсен ытти нацисене пусмăрламалли тата вăтам ĕмĕрсенчи евĕрлĕ погромсем тумалли мĕнпур политики пĕр раса, нимĕçсен аслă раси текенскер, ытти мĕнпур халăхсене кураймании çинче, ытти мĕнпур халăхсем çине йĕрĕнсе пăхни çинче никĕсленсе тăрать. Гитлерла вăрă-хурахсем пĕр халăха тепĕр халăхпа хирĕçтерсе ямашкăн, çапла вара икĕ халăхне те чуралантарса хумашкăн хапсăнаççĕ. Вĕсем пирĕн çĕршывра та çапла пулать тесе шутланă: литовецсем — белоруссене хирĕç, украинецсем — вырăссене хирĕç çĕкленĕç, Совет Союзĕнчи халăхсем хушшинче восстанисем, харкашу-çапăçусем пуçланса кайĕç, тенĕ. Анчах та гитлеровецсен çав ĕмĕчĕсем арканса кайрĕç. Вĕсем супăнь хăмпи пекех çурăлса кайрĕç.

ССР Союзĕнчи халăхсен çемьи пĕрлĕхлĕ, нихăçан арканми лагерь пулса тăрать. Фашистла захватчиксене хирĕç пыракан кĕрешӳре Хĕрлĕ Çар ретĕнче совет çĕршывĕнчи тăванлă пур республикăсен представителĕсем те аллаллăн тăрса çапăçаççĕ. Вырăс халăхĕпе пĕрлех Азербайджанри, Украинăри, Казахстанри, Грузири, Киргизири, Арменири, Узбекистанри тата ытти мĕнпур республикăсенчи рабочисемпе хресченсем те фронт валли пĕтĕм вăйне хурса ĕçлеççĕ. Советлă тăван çĕршывăн пыракан кĕрешӳре вĕсем пурте пĕр шухăш-кăмăллă.

Вырăс халăхĕ, ССР Союзĕнчи пĕртан халăхсен çемьинче чи малти ретре тăрса, нимĕç оккупанчĕсене хирĕç пыракан кĕрешĕвĕн чи пысăк йывăрлăхне хăй çинче чăтса пырать. Вăл, хăйĕн паттăрлăхĕпе, çирĕплĕхĕпе мĕнпур тĕнчери пирĕн тусĕсене савăнтарса хавхалантараканскер, Украинăри, Белоруссири хуласемпе ялсемпĕн паттăррăн та çирĕппĕн кĕрешет, çавнашкалах украинецсем, белоруссем, азербайджанецсем, казахсем, армянсем, ытти мĕнпур халăхсен боецĕсем те Мускавшăн — пирĕн тăван çĕршывăн столицишĕн, тăшмана пусĕнех çĕнтерессишĕн кĕрешеççĕ.

Фронт линийĕ тепĕр енче, тăшман вăхăтлăха тытса илнĕ районсенче, ĕçсынисем питĕ йывăр хĕн-хур тӳсе пурăнаççĕ. Фашистла çынçиенсем мирлĕ халăха тискер кайăкла асаплантараççĕ. Нимĕç захватчикĕсем хăйсен çулĕ çинче пурне те саранча пекех пĕтерсе хăвараççĕ. Гитлерла бандитсем хуласемпе ялсене аркатса ишĕлтереççĕ, мирлĕ халăха ирĕксĕрлеççĕ, вĕлереççĕ, хĕрарăмсене, ача-пăчасемпе старикcене те шеллемеççĕ. Аслă çул çинчи вăрă-хурахсем пекех вĕсем граждăнла халăхăн пурлăхĕпе продовольствине çаратаççĕ, çапла вара халăха выçăпа вилес шăпа умне тăратса хăвараççĕ. Эпир хамăрăн халăх çавăн пек асаппа хĕн-хур тӳснине ĕмĕрне те манас çук, эпир вырăссем, украинецсем, белоруссем, латышсем, эстонецсем, литовецсем, молдавансем тăкнă кашни юн тумламĕшĕн тавăратпăр.

Нимĕçсен империалисчĕсемпе захватчикĕсем хăйсен çаратуçăсен, пусмăрçăсен политикипе пĕр тĕллев патне кăна çитрĕç: Совет Союзĕнче пурăнакан пур халăхсем те большевиксен партийĕ тата халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ тавра пĕрлĕхлĕ боевой лагере татах та çирĕпрех пĕтĕçрĕç. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Совет халăхĕ нимĕçсен военщинипе пĕрремĕш хут мар тĕл пулать. 1918 çулта пирĕн çĕршыв, Ленин ертсе пынипе, нимĕç империалисчĕсене аркатса тăкса сирсе пăрахрĕ. Сталин юлташ каланă тăрăх, ун чухне те нимĕç империалисчĕсем хăйсен штыкĕсем çинче пирĕн çĕршыври рабочисемпе хресченсем валли «тутарсен авалхи пусмăрĕнчен нимĕн чухлĕ те ырă мар намăсла пусмăр илсе килнĕ».

Кӳлĕнсе кайнă, империалистла çăткăн та сăхă тискер кайăк ун чухне хăйĕн ĕнсине хусрĕ. Ленин вăл вăхăтри Германи империализмĕ çинчен çапла каланă: «Малтанах вăл (Германи империализмĕ) Европăн тăватă пайĕнчен виçĕ пайне çити саралса кайрĕ, унтан вара вăл, хăй хыçĕнчен çавтери хăрушла усал шăршă хăварса, çавăнтах лапланса çурăлчĕ» (XXIII т., 266 стр.).

1918 çулта пирĕн çĕршыври ĕçсынисене чуралантарма хăтланса пăхнă нимĕç империалисчĕсен ĕçĕ çакăн пек пĕтнĕ. Халхи вăхăтри вăрçă та çакăн пекех вĕçленесси пирки нимĕн иккĕленмелли те çук.

Пирĕн çĕршыв вăрçасшăн пулман; совет халăхĕ мирлĕ строительство ĕçне туса пынă. Совет правительстви хăйĕн тулашри политикинче тăтăшах мир политикине пурнăçа кĕртсе пынă, фашистла империалистсен агрессиллĕ шухăшĕсене ывăнма пĕлмесĕр тăрă шыв çине кăларса пынă. Хăйĕн мирлĕ политикипе Совет Союзĕ пĕтĕм тĕнчери тӳрĕ кăмăллă миллионшар çынсене хăй енне çавăрчĕ, хăйне пулăшса пымалла турĕ.

Нимĕç захватчикĕсем иртнĕ çулти июнь уйăхĕнче пирĕн çĕршыв çине ултавлăн килсе тапăнни совет халăхне хĕçпăшал тытмалла турĕ. Вăрçă пирĕн çĕршывăн пурнăçĕнче çавăрăну пункчĕ пулса тăчĕ. Мирлĕ строительствăн тапхăрĕ пĕтрĕ, тĕнчери мĕнпур империалистсем хушшинчи чи тискер те чи агрессиллĕ, чи вăрă-хурахла империалистсене хирĕç — нимĕç захватчикĕсене хирĕç ирĕклĕхшĕн пыракан аслă вăрçă тапхăрĕ пуçланса кайрĕ.

Вăрçă пуçланнăранпа 7 уйăх иртрĕ. Хĕрлĕ Çар, унпа пĕрлех пирĕн мĕнпур çĕршыв та, йывăр кунсене пурăнса тӳсе ирттерчĕ. Пирĕн боецсемпе командирсем хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр геройла çапăçрĕç, анчах гитлеровецсем çавтери пысăк вăй пухса ССР Союзĕ çине вăрă-хурахла кĕтмен çĕртен те ултавлăн килсе тапăннине пула пирĕн территорин чылай пысăк пайне тытса илчĕç. Пирĕн çарăн, хăйĕн ĕçĕсем вăхăтлăха ăнăçсăр пулса пынă пирки, каялла чакма тиврĕ.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Совет Союзне уйăх çурă — икĕ уйăх хушшинче «пĕтерсе тăкма» шутланă. Вĕсен çак планĕ арканса кайрĕ. Вара гитлеровецсен Совет Союзне хĕл пуçланичченех «пĕтерсе тăкмалли» çĕнĕ планĕ сиксе тухрĕ. Гитлерла заправилăсем вăрçă ĕçне туса пыма план тăрăхах çакăн пек палăртса хунă тесе темиçе хутчен те каласа панă.

Октябрь уйăхĕн пĕрремĕш числисенче нимĕçсен командованийĕ совет войскисене хирĕç, мухтанчăк Гитлер каланă тăрăх, юлашки, «татăклă наступлени» пуçласа янă. Гитлеровецсен шухăшĕпе, çав наступлени Мускав кунçулне, çавăнпа пĕрлех халхи вăхăтри вăрçă мĕнле вĕçленессине те татса памалла пулнă. Çак ыйту тĕлĕшпе Гитлер официальнăй йĕркепе тухса каланисенче, çавнашкалах тата нимĕçсен фашистла çарне панă приказсенче акă мĕн каланă. Мускава, Ленинграда, Кавказри нефть районĕсене тытса илмелли плансем çинчен каланă май, Гитлер Хĕвелтухăç фронтĕнчи салтаксене 1941 çулти октябрĕн 2-мĕшĕнче панă приказра çапла çырнă: «Темиçе эрне хушшинче промышленноçлă виçĕ тĕп районпа пĕтĕмпех хамăр алла тытса илетпĕр. Юлашкинчен, юлашки хут питĕ вăйлăн пырса çапса, хĕл пуличчен тăшмана пĕтĕмпех пĕтерсе тăкмалăшкăн пурне те туса хатĕрлене. Хатĕрленес тĕлĕшпе çын вăйĕ тума пултарнă пур ĕçсене те пĕтĕмпех туса çитерне. Ку расра хатĕрленес тĕлĕшпе пур ĕçсене те, противника халĕ вилмеллех çапса хуçмалли положение кĕртсе ӳкермеллине шута илсе, план тăрăх, утăм хыççăн утăм туса пынă. Паянхи кун кăçалхи юлашки пысăк та татăклă çапăçу пуçланса каять». (1941 çулти октябрĕн 2-мĕшĕнче Гитлер Хĕвелтухăç фронтне панă приказ).

Гитлер нимĕç халăхĕпе пĕтĕм тĕнче умĕнче 1941 çулти октябрĕн 3-мĕшĕнче тухса каланă сăмахĕнче татах тепĕр хут сӳпĕлтетсе илчĕ: «48 сехет каярах питĕ пысăк операцисем пуçланса кайрĕç. Çак операцисем ĕнтĕ Хĕвелтухăçĕнчи тăшмана пĕтерсе тăкма пулăшĕç. Тăшмана халĕ ĕнтĕ аркатса тăкнă, текех вăл хăйĕн вăйне нихăçан та каялла тавăраймĕ».

Кунта кăтартса панă документсенчен çакă курăнса тăрать: Гитлерпа унăн преступникла шайки Совет войскисене Мускав патĕнче çĕмĕрсе тăкма шутланă, Мускава тытса илме, пирĕн столицăна çаратма, хăйĕн вăрă-хурахла çарне Мускавра хĕллехи хвартирсем пама ĕмĕтленнĕ. Çавнашкалах тата документсенчен çакă курăнса тăрать: гитлерла банда суя сăмахсемпе тупа туса, темĕн те пĕр тума пулса сăмах парса, хăйĕн улталаннă салтакĕсен массисене «юлашки» наступленине хутшăннăшăн отпуск пама, Мускава тытса илнĕ хыççăн мир туса пама сăмах парса, хăйĕн çарĕ арканма пуçланине тытса чарасшăн пулнă.

Анчах та ваттисем каланă паллă халлапра: «Сиксе каçиччен хоп тесе ан кала», тенĕ. **(Кулаççĕ).**

Гитлер малтанах пĕлтернĕ наступлени пуçланчĕ те... путланса ларчĕ. Нимĕçсен çарĕ Россинчи çулсем çинче, уйсемпе вăрмансенче хăйĕн салтакĕсен виллисене пăраха-пăраха хăварса чакма тытăнчĕ.

Хăйĕн октябрь уйăхĕнче пуçласа янă наступленийĕпе Гитлер пĕр результат çеç илме пултарчĕ: хăйĕн çарне вăй-хал енчен те, шухăш-кăмăл енчен те татах та ытларах вăйсăрлатса хăварчĕ. Гитлерăн пыйтланса кайнă, выçă, çарамас йыткĕтĕвĕсене Мускавран чылай инçетре чарса лартнă. Германири халăх фронтран çакăн пек хыпарсем илсен, çуеçĕ те ултавçă Гитлер салтаксене те, нимĕç халăхне те татах та тепĕр хут улталанине курса ĕненчĕ.

Ноябрь уйăхĕн варринче Гитлер Мускав çине тепĕр «юлашки» наступлени пуçласа яни çинчен пĕлтерчĕ. Çак наступлени çинчен Хĕвелтухăç фронтĕнчи салтаксене панă приказра Гитлер çапла çырнă: «Сывхарса килекен событисене, уйрăмах хĕллехи вăхăт паллă вырăн йышăнса тăнине, çарăн материальнăй лару-тăрăвĕ япăххине шута илсе, çывăх вăхăтсенчех кирек епле хакпа та пулин Мускава тытса илме хушатăп», тенĕ. Ку расра Гитлер радио тăрăх нимĕçсемпе пĕтĕм тĕнче умĕнче текех мухтанман. Вăл нимĕç халăхĕнчен октябрь уйăхĕнчи наступлени путланса ларнине, унăн татах çĕнĕ наступлени тума тивнине пытарса хăварнă. Ноябрь уйăхĕнче панă çак приказра ĕлĕкхи пек мухтанни тата сĕмсĕрленни, хăйне хăй планни текех çук ĕнтĕ. Ун вырăнне вăл йĕрĕнтерсе тата çухалса кайса кăшкăрашма пуçланă.

1941 çулти ноябрĕн 16-мĕшĕнче Германи войскисем, Хĕрлĕ Çара пырса çапмашкăн вуншар пехотнăй, мотопехотнăй, танковăй дивизисем пухса тăратса, Мускав çине иккĕмĕш генеральнăй наступлени пуçласа ячĕç. Вĕсем фронтăн флангĕсенчен çавăрăнса кĕрсе пирĕн тыла тухма, çапла вара Мускава хупăрласа илме шутланă. Калама та кирлĕ мар, Мускав тата унпа пĕрле пĕтĕм çĕршыв та питĕ йывăр кунсене пурăнса ирттерчĕç. Пĕр флангра тăшман Яхрома хулине тытса илчĕ, тепĕр флангра Каширăпа патне çывхарса пыма пуçларĕ. Анчах çак йывăр кунсенче те пирĕн халăх, пирĕн çар тăшмана тытса чарасси пирки, ăна каялла хăваласа тытăнса çĕмĕрсе тăкасси пирки пĕр минутăлăха та иккĕленсе тăмаççĕ. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

*Юлашки 2-мĕш страницăра*

# ЛЕНИН ЯЛАВĔПЕ

## В. И. ЛЕНИН вилни XVIII çул тултарнă ятпа 1942 çулти январĕн 21-мĕшĕнче пулнă траурлă-чаплă ларура А. С. ЩЕРБАКОВ юлташ тунă доклад

### (ЮЛАШКИ)

Иккĕленсе тăмарăç, юлташсем, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен вăйĕ çине, пирĕн çулпуçăн, полководецăн Сталин юлташăн генилле вăйĕ çине çирĕп шанса ĕненсе тăчĕç. (Тăвăллăн алă çупаççĕ, алă çупни овацие куçать. Пурте ура çине тăраççĕ).

Вăл çавăн пек пулса тухрĕ те ĕнтĕ. Пирĕн войскăсем, иртнĕ çапăçусенче противникăн вăйне хавшатса çитерсе, декабрь уйăхĕн тĕррремĕш числисенче нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç наступлени пуçласа ячĕç те, вĕсене аркатмаллах темиçе хутчен пыра-пыра çапрĕç. Пирĕн войскăсем пуçласа янă наступленипе пула противникăн флангĕсенчи ударлăй группировкисене аркатса тăкнă. Тăшман хăйĕн техникине, хĕçпăшалне пăрахса хăварса тата питĕ пысăк çухатусем тÿссе, васкасах каялла чакма тытăнчĕ. Фашистла ухмахсенчен пуçкиç хаярррăн тăрăхласа пулчĕ. Гитлеровецсен Мускава хупăрласа илсе йышăнмалли планĕ тĕппипех арканса кайрĕ. «Столицăна—Мускава илтерсе тăкас» тĕлĕшпе ноябрь уйăхĕнче ухмахла хăтланса пăхни нимĕçсен çарне питĕ хакла ларчĕ. Пирĕн войскăсем контрнаступлени туса пынă вăхăт хушшинче—декабрĕн 6-мĕшĕнчен пуçласа январĕн 15-мĕшне çитиччен, урăхла каласан, пĕр уйăх та 10 кун хушшинче — нимĕçсен çарĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсене, вилнисене шутласан кăна та, 300.000 çынна яхăн çухатнă. (Алă çупаççĕ).

Çак вăхăт хушшинчех совет войскисем нимĕçсенне 4.801 оруди, 3.071 миномет, 8.000 çити пулемет, 15.000 автомат, 90.000 ытла винтовка, 2.766 танк (алă çупаççĕ), 300 ытла бронемашина, 33.640 автомашина, 102 радиостанци, 2.000.000 ытла снаряд, 30.000.000 ытла винтовка патронĕ, 200.000 ытла мина, 6.000 яхăн мотоцикл, нумай пиншер велосипедсем, лавсем, лашасем тата ытти çар пурлăхĕсем те тытса илнĕ. Çав вăхăт хушшинчех нимĕçсенне 1.000 ытла самолет пĕтерсе тăкнă.

Çак данныйсем ĕнтĕ Гитлерăн вăрăхурахла войскисем Мускав патĕнче мĕнтери йывăр поражени тÿснине тата Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕн ытти участокĕсенче те Хĕрлĕ Çар вĕсене мĕнтери вăйлăн пырса çапнине кăтартса пачăççĕ.

Хăйсен ăнăçсăр ĕçĕсене пытарса хăварас тесе, нимĕçсен командованийĕ пĕр суя хыççăн тепĕрне, пĕр ухмахла юмах хыççăн тепĕрне шутла-шутла каларать. Декабрĕн 10-мĕшĕнче нимĕçсен командованийĕ çапла пĕлтерне: Хĕвелтухăç фронтĕнче вăрçă ĕçĕсем мĕнле пулса пырасси тата вĕсен характерĕ «малашне вырăс çĕршывĕнчи хĕл условийĕсенчен килет. Çанталăк условийĕсем наступленилле пысăк операцисем тума май паман пирки, Германи командованийĕ наступлени тăвассине пĕрахăçлать», тенĕ.

Акă ĕнтĕ сана, кипеми, Юрий куне! Пĕрре: «Сталин вăрçă ĕçĕсен пĕтĕм йывăрĕшĕн центрне урăх вырăна куçарма хăтланас пулсан та, Германи çарĕн командованийĕ Мускава илессине хăйĕн тĕп тĕллевĕ тесе шутлать», тесе калаççĕ, ун хыççăнах, шăлах ĕнтĕ нимĕçсен командованийĕ калана тăрăх, «большевиксен столици çине туса пыракан наступлени питĕ шала кĕрсе кайрĕ, халĕ ĕнтĕ лайăх бинокль витĕр Мускав хулин варрине те курма пулать» тесе пĕлтернĕ тапхăрта, сасартăках вĕсем, куратăр-и, хĕл айĕнчĕ тесе—наступлени тăвассине пĕрахăçлаççĕ. Суйса карпран вĕçерĕннĕ гитлеровецсен çав фокус-покусне пирĕн хаçатсенче те, ютçĕршывсен хаçачĕсенче те тăрă шыв çине кăларнă, вăл фокус-покусран халĕ нимĕн те тăрса юлман. Нимĕçсен Мускава тытса илмелли планне шартлама сивĕсем мар, Хĕрлĕ Çар аркатса тăкнине нимĕн иккĕленмелле марах кăтартса панă ĕнтĕ. Нимĕçсем каялла чакма тытăннă вăхăтра сивĕсем пулман та.

Çапла ĕнтĕ, нимĕçсен командованийĕ хăйĕн «наступлени тумалли операцийĕсене» пĕрахăçлани çинчен пĕлтернĕ. Анчах та, наступлени тумалли çав операцисем çук кăна мар, нимĕçсен каялла чакса пĕр хула хыççăн тепринчен туххса кайма тивет пулсан, мĕн тумалла-ха вара? Кунта хăйхи нимĕçсем çĕнĕ сăлтав çинчен ăнлантарса пама тытăнаççĕ, анчах çавăн пек ăнлантарса пани вăл, фронта тÿрлетесси çинчен тата оборонăн темĕнле юмахри пек хĕллехи линийĕ çине каялла чакса, хĕллехи хваттерсене ырнаçасси çинчен малтан ăнлантарса пани пекех, айванла япала пулса тăрать. Малтан нимĕç захватчикĕсене Ростоври тата Тихвинри хваттерсем килĕшмен, унтан вара Мускаври хваттерсем кăмăла кайман. Çавăн пекех нимĕçсене Калининри, Елецри, Солнечногорскри, Волоколамскри, Наро-Фоминскри, Калугăри, Можайскри тата ытти нумай çĕрти хваттерсем те çырлахтарайман иккен (кулаççĕ, алă çупаççĕ), чăн та çавтерех çырлахтарайман пулас, мĕншĕн тесен нимĕçсем çав хваттерсемпе усă куриччен пушă хирте вилсе пĕтме те кăмăллараx панă. Чăнласăр килнĕ гитлерла «квартирантсем» хваттерсем тĕлĕшпе çавтери чăкăлташ та кутăн çын тесе шухăшлама пулать, анчах та çавăн пек чăкăлташланнине ăна питех те çăмăллăн ăнлантарса пама пулать—чĕнмесĕр килнĕ «квартирантсене» пирĕн Хĕрлĕ Çар ăнсĕрен пачĕ, вĕсене хăвалама тытăнчĕ тата халĕ те хăвалаcа пырать. (Алă çупаççĕ).

Фронта тÿрлетесси çинчен сÿпĕлтетнинчен те ĕç çавăн пекех пулса тухрĕ. Фронта тÿрлетнĕ вăхăтра çĕршер пин çын çухатнине, пиншер танксемпе орудисем, вуншар пин автомашинăсемпе винтовкăсем, пулеметсем, снарядсем, тьысвлĕ поездсем тата ыттисене те çухатнине ăçта курма пулать-ха ăна? «Гитлерпа унăн кампанийĕ» тежен картла вылямалли çуртри фашистла жуликсем суеçтере-суеçтере пĕтĕмпех картран вĕçерĕннĕ.

Гитлеровецсем ухмахла сÿпĕлтетнинчен тĕрĕсси пĕр япала кăна пур—нимĕç фашисчĕсем пытăлатса кайнă йытĕгĕвĕ сывлăш çавăрса илме уйрăмах халĕ май тупасшăн пулнă пулĕччĕ. Хăйсен хавшаса çитнĕ войскисене йĕркене кĕртмешкĕн, çĕнĕ авантюрăсем тума вăйсем пухмашкăн çавăн пек сывлăш çавăрса илмелли самант гитлеровецсене халĕ вилес пекех кирлĕ.

Пирĕн задача—нимĕç захватчикĕсен çав планĕсене аркатса тăкасси, тăшмана канăç памасăр унăн чĕрĕ вăйĕсене вĕлерсе пĕтересси, техникине пĕтерсе тăкасси пулса тăрать. Иккĕленмелли çук, Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсем тата политработникĕсем çав задачăна чыслăн пурнăçа кĕртессишĕн хăйсен вăйĕсене хĕрхенсе тăмĕç.

* * *

Пирĕн çĕршыв, пирĕн Хĕрлĕ Çар тĕрĕс ĕçшĕн, совет çĕршывĕн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн кĕрешеççĕ. Эпир пурпĕрех çĕнтеретпĕр, нимĕçсен фашистла захватчикĕсен çарне пуçĕпех çапса аркатмасăр эпир кĕрешме чарăнмастпăр. Эпир хамăр çĕнтересе шанни вăрçăри вăйсене тĕрĕс шута илсе хаклани çинче никĕсленсе тăрать. «Тăшман хăшпĕр хăраса ÿкнĕ интеллигентиксем кăтартса панă пекех вăйлă мар. Шуйттан ăна сăрласа кăтартнă пекех хăрушă мар». (СТАЛИН).

Фашистсен çарĕ халĕ ĕнтĕ вăрçăн малтанхи уйăхĕсенчи çар мар,—унăн наступлени тăвас хастарлăхĕ те, дисциплини те ун чухнехи мар. Хĕрлĕ Çар хăватлăн пыра-пыра çапнипе куç умне çаккă уççăнрах та уççăнрах тухса тăрать: фашистла захватчиксем хăйсем кирек ăçта та каçкăрса суйăхнă пекех вăйлă мар. Гитлерла çаратуçă çар ишĕлсе пыни уççăнрах та уççăнрах палăрма пуçлать. Ĕç мĕн чухлĕ шаларах кĕрет, фашистсен çарĕ çавăн чухлĕ хăвăртрах ишĕлсе пырать. Тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсем хăйсем вăрçăпа ывăнса çитни çинчен, хăйсен ĕçĕ ăнăçлă пулассине шанми пулни çинчен, хăйсем чĕрĕлле киле тавăрăнма май пулĕ-ши тесе питех те пикленсе ÿксе шухăшлани çинчен час-часах каласа параççĕ.

Гитлерла çар юн юхтарса халран кайса пынă вăхăтра эпир захватчиксене хирĕç тăрасси ÿссех пырать, пирĕн вăйсем кунран-кун ÿссе тĕреклене пыраççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем, командирĕсем тата политработникĕсем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçнинчен пирĕн туссем тĕлĕнеççĕ. Пирĕн тăшмансем те, вĕсен вăрçă планĕсем путланса ларнине ăнлантарса панă чухне, вĕсем Хĕрлĕ Çарăн вăйĕсене хакламаннине шăл витĕр каласа ирĕксĕрех йышăнаççĕ. Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла войскисене çĕмĕрнĕ хыççăн çĕмĕрсе пырать пулсан, çавна йышăнмасăр мĕнле иртерĕн-ха? Гитлеровецсем çав çĕмĕрсе пыракан Хĕрлĕ Çара пĕтерсе тăкнă тесе нумай хут сырчĕç ĕнтĕ.

Ыйту туха тăрать: Хĕрлĕ Çарăн вĕçĕ-хĕррисĕр вăйĕсен çăлкуçĕ ăçта-ха? Пирĕн çар кашни кунах хăюллă та паттăр, çапăçура хăрама пĕлмен геройсене çуратса пынине мĕнпе ăнлантарса памалла-ха? Пирĕн çарсене тата вĕсен боецĕсене вăй парса тăракан çăлкуçĕ вăл—пирĕн çĕршыв тĕрĕс ĕçшĕн кĕрешнине ăнланса тăнинче пулать. Пирĕн çарсене отечественнăй вăрçă туса пыма аслă Ленинăн хăвачĕ хавхалантарса пырать. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç хăйсем тĕрĕслĕхлĕ отечественнăй вăрçă туса пынине совет çыннисем пĕлсе тăраççĕ. Революци пулнă хыççăнхи çулсенче пирĕн патра çĕнĕ ăру ÿссе çитенчĕ, вăл ăру ирĕклĕ çĕршыва пурăнассине пурнинчех те хакла хурать.

«Тăшман хаяр та сĕмсĕр. Вăл эпир тар юхтарса ĕçленĕ çĕрсене туртса илес, хамăр вăйпа ĕçлесе тунă тырпула тата нефте туртса илес тĕллеве лартать. Вăл помещиксен влаçне каялла таврас, царизма каялла таврас, вырăссен, украинецсен, белоруссен, литовецсен, латышсен, эстонецсен, узбексен, тутарсен, молдавансен, грузинсен, армянсен, азербайджанецсен тата Совет Союзĕнчи ытти ирĕклĕ халăхсен нацилле культурине нацилле государственноçне пĕтерсе хурас тĕллеве лартать, вĕсене нимĕçлетес, вĕсене нимĕç князĕсемпе баронĕсен чурисем туса хурас тĕллеве лартать. Çапла вара, ĕç Совет государствин пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен, ССР Союзĕнчи халăхсен пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен, Совет Союзĕнчи халăхсем ирĕклĕн пурăнасси, е вĕсем чуралăха вĕрсе ÿкесси çинчен пырать» (СТАЛИН).

Çапла вара, хăйсем тĕрĕс ĕçшĕн, хăйсен тăван çĕршывĕшĕн, ирĕклĕ пурнăçшăн кĕрешнине ăнлани Хĕрлĕ Çарăн боецĕсене тĕлĕнмелле паттăр ĕçсем тума хавхалантарать, вĕсен вăйне ишшер тата вишшер хут ÿстерет. Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне ăнланса, çынсем, ĕнер кăна заводсенче тата колхозсенче мирлĕ ĕç туса пынăскерсем, уйрăмăнах нимĕнпе те палăрмансккерсем, паян хăюллăн, паттăррăн тата харсăррăн чи лайăх тĕслĕхсене кăтартаççĕ.

Мускава хÿтĕленĕ мухтавлă кунсенче пирĕн пĕр рубеж çине темиçе вуншар танк тапăнса пынă. Çак рубежа советăн 29 гвардеецĕ хÿтĕлесе тăнă. Кайран вĕсен 28 çын çеç юлнă. Пĕрне гвардеецсем хăйсемех персе вĕлернĕ, мĕншĕн тесен вăл хăравçă пулнă, тăшман умĕнче аллисене çĕкленĕ. Советăн 28 çынни вара—вĕсен хушшинче вырăссем, украинецсем тата казахсем пулнă,—танксене хирĕç историре никăçан пулман пек паттăррăн çĕрешнĕ. Тăшманăн 18 танкне çĕмĕрнĕ. Çак танмар çапăçура 28 боец каялла чакман, вĕсем Мускава хÿтĕлесе паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ.

Çĕнтерме пулать-и-ха ĕнтĕ çакăн пек халăха!

Çавăн пек ĕçех пулнă Мускав патĕнче те, Хаяр çапăçу пынă. Пирĕн подразделени пысăк йывăрлăхсене çĕнтерсе малалла куçса пынă, тăшман флангĕсенчи ДЗОТ-сенчен вăйлăн персе тăнă. Пирĕн войскăсем наступлени тăвасси чарăнса тăнă. Çак вăхăтра ĕнтĕ рядовой боец-комсомолец Сосновский тăшманăн ДЗОТ-чĕ патне шуса пынă, пулемет çине ыртăнса хăйĕн ÿтĕпе ăна çĕр çумне пусса лартнă, амбразурăна хăйĕн ÿчĕпе хупласа хунă. Пулеметран персе янă пульăсем Сосновскин кăкăрне кĕрсе тулнă, анчах фашистсен пулемечĕ те чыхланса ларса пеме пăрахнă, вара пирĕн боецсем тăшман рубежне тытса илнĕ.

Çĕнтерме пулать-и-ха ĕнтĕ çакăн пек халăха?!

Азербайджан халăхĕн ывăлĕ Мамедов юлташ пĕр çапăçура 70 фашиста вĕлерсе пĕтернĕ. Тата мĕн чухлĕ стрелоксем, танкистсем, летчиксем, артиллеристсем, краснофлотецсем кунрантунах çавăн пек паттăр та мухтавлă ĕçсем тăваççĕ пулĕ!

Хăюллă та паттăр çынсем пирĕн нумай. Вĕсем хăйсен тăван çĕршывне кăкăрпа хÿтĕлеме, пурнăçа шеллемесĕр кĕрешме тата çĕнтерме хатĕр тăраççĕ. Пирĕн çĕршывра геройсене юратаççĕ тата хисеплеççĕ.

Пирĕн халăх пек халăха, пирĕн çĕршыв пек çĕршыва çĕнтерме пулать-и-ха ĕнтĕ?! (Алă çупаççĕ).

Пирĕн çарсене вăй парса тăракан çăлкуç — совет тылĕ пулса тăрать. Тыл фронтшăн—чи кирли. Çирĕп тылсăр тĕнчери пĕр çар та çĕнтерме пултараймасть. Тыл фронта хĕçпăшалсем, боеприпассем, продовольстви парса тăрать. Тыл фронта боецсем, шухăш-кăмăлсем, идейăсем парса тăрать. Тылпа фронт, халăхпа çар пирĕн çĕршывра пĕр сывлăшпа, пĕр пек интересемпе пурăнаççĕ, вĕсен пĕр тĕллев — тăшмана çĕмĕрсе тăкасси. Пирĕн совет тылĕ хăйĕн çарне тĕрек парса тăрать, вăл боецсене тĕлĕнмелле ĕçсем тума хавхалантарать.

Тăван çĕршыва юратнин аслă вăйĕ, хамăрăн ĕç тĕрĕс ĕç пулнине ăнланса тăни фронтра боецсен вăй-хăватне çĕклет, хăюллă та паттăр ĕçсем тума хавхалантарать. Советла патриотизмăн çав вăех ĕнтĕ рабочисене те çĕклесе малалла илсе пырать, çавна пула вĕсем талăкĕ-талăкĕпе цехра ĕçлеççĕ, нормăсене ик-виçĕ хут тата ытларах та ирттерсе тултараççĕ. Вăл, советла патриотизмăн çав вăйĕ, колхозниксене фронтпа çĕршыв валли ытларах та ытларах продовольстви парассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме çĕклесе пырать. Советла патриотизмăн тата тăван çĕршыва юратнин çав хăватлă вăйĕ фронтра та, тылра та геройсене çуратать.

Пирĕн боецсене тăшман тылĕнче хăюллăн кĕрешекен партизансем пысăк пулăшу параççĕ. Партизансем нимĕç захватчикĕсен техникине тата уйрăмăнах чĕрĕ вăйне пĕтерсе пыраççĕ, çыхăну линийĕсене, çулĕсене пăсаççĕ, совет командованине тăшман çинчен хаклă сведенисем парса тăраççĕ тата ытти те.

Партизанла движени хирĕç кĕрешме хушса, нимĕç çарĕ валли кăларакан приказсем питех те нумай пулни партизансем фашистла захватчиксене пысăк сиен кÿнине ĕнентерÿллĕн çирĕплетсе парать.

Нимĕçсем вăхăтлăха тытса илнĕ районсенче партизансен движенийĕ анлăн саралса кайни эпир нимĕç оккупанчĕсене хирĕç туса пыракан вăрçă халăх вăрçи, отечественнăй вăрçă пулса тăнине ĕнентерÿллĕн кăтартса парать.

Пирĕн совет патриоткисем тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăнине уйрăмăнах палăртса хăвармалла. Нумай хĕрарăмсем халĕ фабрикăсемпе заводсенче ĕçлеме станоксем умне тăчĕç; нумай пиншер хĕрарăмсем çĕнĕ профессисене вĕренсе алла илсе, Хĕрлĕ Çар ретне кайнă арçынсем вырăнĕнче ăнăçлăн ĕçлеме тытăнчĕç. Ялсенчи вуншар пин хĕрачасем трактористкăсем, комбайнеркăсем пулса тăчĕç. Совет патриоткисем аманнă боецсем валли хăйсен юнне параççĕ, газетсенче ĕçлеççĕ, фронта парнесем ярса параççĕ, пирĕн боецсен ачисене пăхса усраççĕ, вĕсен çемьисемшĕн тăрăшаççĕ.

Хĕрÿллĕ кунсенче, тăшман Мускав патнелле çывхарса пынă чухне, нумай вуншар пин ĕçсыннисем оборона рубежĕсем турĕç. Строительсен çав çарĕнче виçĕ чĕрĕкĕ хĕрарăмсем пулнă. (Алă çупаççĕ).

Çапла вара, кăнтăрла та çĕрле те, çумăрла тата пылчăклă çанталăкра та, сивĕре тата юр çунă вăхăтра та, хăшпĕр чухне тăшман персе тăнă вăхăтра та ĕçлесе, пирĕн мухтавлă совет патриоткисем Мускав патĕнче укреплениссем туса хучĕç.

Пирĕн çĕршыври хуласемпе ялсенчи ĕçсыннисем, хăйсен пуçарăвĕпе, лăпкăн тата шавламасăр, хĕл пуçланиччен чылай малтан Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли миллионшар çăматăсем, кĕрĕк пиншаксем, тирсем, ăшă кĕпе-йĕмсем, çăм чăлхасем тата алшăлсем, тиртен çĕленĕ алсасем тата ытти ăшă япаласем пухса пачĕç.

Çак япаласем пурте, паллах, боецсем валли кирлĕ. Анчах ĕç кунта çав парнесем Хĕрлĕ Çар боецĕсене татах та лайăхрах тумлантарма пулăшнинче кăна мар, — хăйĕн çарне ăшă тумлантарас тесе государство хăех тăрăшрĕ, — совет воинĕсем пирки çакăн пек тăрăшни халăх çарпа пĕрлĕхлĕ пулнине, халăх çар интересĕсемпе пурăннине, çавăнпа вара тăван çĕршыва хÿтĕлекенсене пур енчен те пулăшма хатĕр тăнине уççăн кăтартса парать.

Ĕçсыннисем фронта çĕнĕ çул ячĕпе ярса панă çĕршер пин парнесем, оборона фондне укçа-тенкĕпе продуктсем хывни, ĕçсыннисен делегацийĕсен фронтсене кайни тата ытти те халăх хăйĕн çарĕпе пĕрлĕхлĕ пулнине уççăн кăтартса параççĕ.

Çаксем пурте пĕтĕм халăх хăйĕн çарне чăн-чăнах юратнине, çар халăхпа çирĕп çыхăнса тăнине кăтартса паракан паллăсем пулса тăраççĕ. Çакăн пек ĕнтĕ пирĕн аслă халăхăн сăн-сăпачĕ, унăн шухăш-кăмăлĕ.

Пирĕн тăшмансен лару-тăрăвĕ вара пачах та урăхла.

Нимĕç захватчикĕсем хăйсем тытса илнĕ çĕршывсенчи халăха нимĕн юлмиччен çаратса, хăйсен чурисем туса хунă. Халĕ çав çĕршывсем оккупантсемшĕн кирек хăш самантра та хыпса тухма пултаракан вулкан пулса тăраççĕ. Çав çĕршывсенчи халăхсем нимĕç захватчикĕсене курайманаççĕ, вĕсене хаярран тавăрмалли сехет çитессе чунтан кĕтсе тăраççĕ. Кунпа пĕрлех çак никама кирлĕ мар, йывăр асаплă вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăлсем нимĕç халăхĕ хушшинче те ÿсĕçсемĕн ÿссех пыраççĕ. Вăрçă ĕçĕсем мĕнле пулса пырассине планпа палăртнă чухне нимĕçсен командованийĕ пысăк йăнăш тунине пула нимĕçсен çарĕ хĕллехи тумтирсемсĕр тăрса юлчĕ тата нимĕçсен çарне хĕллехи условисенче çапăçма пачах та хатĕрлемен пулнă. Çак факт Германи халăхĕн кăмăлне питех те хытă пырса çапрĕ.

Гитлеровецсем хăйсен положенине çар валли халăх хушшинче ăшă тумтирсем пухма тытăннипе тÿрлетме пикенсе пăхрĕç. Ăшă тумтирсем пухас ĕçе вĕсем шăпах фашистла мерзавецсене ирттерме тытăннă: штурмовиксем килтен киле кĕрсе, халăха тĕрмене хупассипе е персе вĕлерессипе те хăратса, юлашки япаласене туртса илсе çÿренĕ. Вĕсем тĕрлĕрен ăпăр-тапăрсемпе тĕк-сăтăк япаласенчен те йĕрĕнсе тăман,—пĕтĕмпех пуçтарнă. Нимĕçсен «Данцигер форпостен» ятлă хаçачĕ ку тĕлĕшпе çапла çырнăччĕ: «Мĕн пур — çавна пĕтĕмпех парăр, пурте усăллă пулать. Кивĕ чăлхасемпе алшишсем чĕркуççисемпе ура лаппине ăшăтма юраççĕ; ачасене чăркамалли çĕтĕк одеялăсем çĕлĕксем тунă çĕре каяççĕ. Кĕве çисе янă кивĕ трусиксемпе свитерсенчен çĕлĕк хăлхисем тума юрать» (Кулаççĕ).

Панкрута тухнă гитлерла заправилăсем хăйсен çарне тумлантарма халăхран юлашки кĕпе-йĕмсене туртса илеççĕ пулсан, кĕве çисе янă трусиксемпе пĕчĕк ача одеялĕсене те ĕçе ярасçĕ пулсан,—паллах, ун пек йĕркене халăх нумайччен чăтса тăма пултараймасть.

Нимĕçсен тылĕ — кĕçех сирпĕнсе кайса гитлерла бандăсене пĕтерсе тăкма хатĕр тăракан вулкан пулса тăрать.

* * *

Пирĕн çарпа халăхăн геройла кĕрешĕвне Ленин—Сталин партийĕ ертсе пырать. Вăрçăн хаяр кунĕсем пирĕн большевикла парти речĕсен çирĕплĕхне, парти организацийĕсен çирĕплĕхне тĕрĕслемелли кунсем пулса тăчĕç.

Вăрçă — кашни большевикшăн тĕрĕслÿ витĕр тухмалли хаяр шкул. Нумай пиншер коммунистсем вăрçа тухса кайрĕç. Граждăн вăрçин асран кайми кунĕсенчи пекех, вĕсем пирĕн çарăн речĕсене таччăн пĕтĕçтерсе çирĕплетеççĕ. Вĕсем чи малти ретсенче тăрса çапăçаççĕ, хăйсен примерĕсемпе ытти боецсене хавхалантарса ертсе пыраççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ фашистла захватчиксем коммунистсемпе комсомолецсем çинчен, пирĕн мухтавлă комиссарсемпе политработниксем çинчен тискер кайăкла çилĕпе калаççĕ. Тăшман çавтери урать пулсан, эпир хăюллăнах: пирĕн аслă учителĕн Владимир Ильич Ленинăн идейисем ăнăçлă-нах пурнăçа кĕртсе пыраççĕ тесе, пирĕн большевикла парти тăван çĕршывпа халăх умĕнче хăйĕн обязанноçĕсене чыслăн пурнăçа кĕртсе пырать, тесе калама пултаратпăр. (Алă çупаççĕ).

Эпир тăшмана вăйлăнах çапса амантрăмăр. Анчах та пирĕн çав çитĕнÿсемпех лăпланса лармалла мар. Нимĕç захватчикĕсене эпир пĕтĕмĕшпех çапса аркатайман-ха, тăшманăн вăйĕ пĕтсе çитмен. Вĕсем урса кайсах пире хирĕç тăраççĕ, хăйсем тунă тискер ĕçсемпе преступленисемшĕн хаяр тавăру çитсе çапассинчен хăтăлас тесе, темĕн тума та хатĕр. Тăшман çавтери тискер те ултавлă, нрсĕр,—çакна пирĕн пĕр самантлăха та манас пулмасть. Нимĕç захватчикĕсем хăйсен вăйĕсене çĕнĕрен пухса пирĕн Хĕрлĕ Çара хирĕç çĕнĕрен наступленисем тума хăтланса пăхĕç, ку шухăша вĕсем малашне те пăрахас çук. Тăшмана пĕтĕмĕшпех аркатса тăкма татах та нумай вăй хуни, нумай жертвăсем туни кирлĕ пулĕ. Совет çĕршывĕ нимĕç захватчикĕсем чи вăйлăн та чи хаярран киле-киле çапнисене тÿссе ирттерчĕ. Совет çĕршывĕнчи халăхсен тăшмана татăклăнах аркатса тăкма, ăна пĕтĕмĕшпех çĕнтерме вăй-хăвачĕпе çирĕплĕхĕ çитĕ.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçса хамăрăн вăй-хала ÿстерсех пырар!

Пăлтах вăрçă валли! Пăлтах фронт валли!

Пăлтах çĕнтерÿ тунă çĕре!

Сывă пултăр Хĕрлĕ Çарпа халăхăн çулпуçĕ СТАЛИН! (Нумайччен лăпланма пĕлмесĕр тăвăллăн алă çупаççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. «Урра! Аслă Сталина—урра! Сывă пултăр Сталин юлташ!» — тесе кăшкăрнисем илтĕнеççĕ. Пурте «Интернационал» юрлаççĕ).

---

## ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

### Çурçĕр-Хĕвеланăç тата Калинин фрончĕсенчи войскăсем Холм, Торопец, Селижарово, Западная Двина, Оленино, Старая Торопа хулисене йышăннă

### Пирĕн войскăсен трофейисем

**10 — 12 кун каярах Çурçĕр Хĕвеланăç тата Калинин фрончĕсенчи войскăсем, хаяр çапăçусем хыççăн, противникăн Осташковпа Селижарово хулисенчен кăнтăр енчи çирĕплетнĕ линине çĕмĕрсе тăкнă та малалла куçса пыма тытăннă.**

**Хăйсем умне лартнă задачăна пурнăçа кĕртсе пырса, пирĕн войскăсем 100 километр ытла малалла кĕрсе кайнă. Хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн войскăсем çак хуласене йышăнса илнĕ: ПЕНО, АНДРЕАПОЛЬ, ХОЛМ, ТОРОПЕЦ, ЗАПАДНАЯ ДВИНА, СЕЛИЖАРОВО, ОЛЕНИНО, СТАРАЯ ТОРОПА. Çапла вара нимĕç çарĕсен коммуникацилле тĕп линийĕсенчен пĕрне, Ржев — Великие Луки чугунçула, пирĕн войскăсем татса кĕрсе тытса илнĕ. Халăх пурăнакан 2000 ытла пункта нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă.**

**Январĕн 9-мĕшпе 22-мĕш числисем хушшинче çак трофейăсене ТЫТСА ИЛНĔ: орудисем — 350, танксемпе бронемашинăсем — 52, станковăй тата ручной пулеметсем — 430, минометсем — 90, автомашинăсем — 740, мотоциклсем — 480, велосипедсем — 846, радиостанцисем — 20, минăсем — 26.145, снарядсем — 71.300, патронсем — 805.000, телефон кабелĕ — 360 километр тăршшĕ, пĕр понтоннăй переправочнăй парк, мотопонтонсем — 16, тягачсем — 32, пĕр катер тата 8 двигатель, чугунçул вагонĕсем — 355 тата ытти тĕрлĕ хĕç-пăшалпа пурлăхсем.**

**Торопецпа Андреаполь хулисенче горючин, продовольствин, боеприпассен тата ытти пурлăхсен запасĕсем хунă çар склачĕсене тытса илнĕ, халĕ вĕсене шута илеççĕ.**

**Январĕн 9-мĕшпе 22-мĕш числисем хушшинче нимĕçсенне 17.000 çынна ытла вĕлернĕ тата темиçе çĕр çынна тыткăна илнĕ.**

**Çапăçусенче генерал-полковник Еременко юлташăн тата генерал-лейтенант Куркаев юлташăн войскисем хăйсене уйрăмах палăртнă.**

**СОВЕТ ИНФОРМАЦИ БЮРОВĔ.**

---

## Можайскра

Нимĕçсем Можайскран çавтери васкаса тухса кайнă пирки, хăйсем минăсем лартса тухнă çуртсене аркатса хăварма та ĕлкĕреймен. Халĕ пирĕн саперсем çавсене пăхраса тупаççĕ, картишсене тĕрĕслеççĕ, минăсене сиенсĕрлетеççĕ. Саперсем хыççăн телефонпа телеграф линине йĕркелекен связистсем пыраççĕ. Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсене халăх калама çук хавасланн кĕтсе илет. Малти подразделенисен боецĕсем, чарăнса тăмасăрах, тăшмана хăваласа малалла çĕмĕрсе пыраççĕ. Ĕнер эпир татах питĕ паха тепĕр çĕнтерÿ турăмăр: 1812 çулта вырăс хĕçпăшалĕ ĕмĕр манăçа тухмалла мар чаплă ĕçсем тунă вырăнсем паттăр Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерÿвĕсен свидетелĕсем пулса тăчĕç.

Фашистсенчен ирĕке кăларнă Можайскра хулари ĕçсыннисен пысăк митингĕ пулса иртрĕ. Партин хулари комитечĕн секретарĕ Скачков юлташ, нумаях та пулмасть районри партизансен движенине ертсе пынăскер, хăюлăшăн Хĕрлĕ Ялав орденĕ илме тивĕçлĕ пулнăскер, халăха Можайск хулине пĕрлелес тĕлĕшпе мĕнпур вăя хурса ĕçлеме чĕнчĕ.

Нимĕçсенчен тарса тухса кайнă халăх ерипенех хулана таврăнать. Фашистла мерзавецсем хулара туса хăварнă çаратусен, ирĕксĕрленисен, вĕлернисен тата тискер кайăкла ĕçсем тунисен вартинисем ытларах та ытларах палăрса пыраççĕ. Пирĕн пата ĕçрекен хĕрарăм—Можайскри культура çуртĕн уборщици Павла Ивановна Мохичева пырать. Нимĕçсем унăн 11 çулти ывăл ачине вăл Владимир ятлă пулнăшăн çеç персе пăрахнă. 17 çулти рабочие Евгений Ушакова 5 сехет иртсен урама тухнăшăн персе пăрахнă. 66 çулти Матвей Терентьевич Чекалина, Акимов старике, лесопунктра ĕçлекен Алексей Кузьмина нимĕçсем урамра тытнă та хÿме çумне тăратса пĕр сăлтавсăрах персе пăрахнă. Амăшĕ хăйĕн ачин ÿчĕ çинче 6 пуля лекнине тупнă.

Хула центрĕнче, скверта, нимĕçсем виçелица туса лартнă та çав виселица çинче пĕр паллă мар патриотăн вилли эрне хушши çакăнса тăнă.

Хулари çынсем нимĕçсем хĕрарăмсене пусмăрлани çинчен, халăха çаратни, мăшкăллани çинчен тарăхса та ыйлханса каласа параççĕ. Хĕрарăмсемпе хĕрсем нÿхрепсемпе хупăксене пытаннă, вăрмансене туха-туха тарнă.

Совет организацийĕсен хулана таврăннă работникĕсем фашистсем тунă тискерлĕхсен çĕнĕрен çĕнĕ фактĕсене кăтартса параççĕ. Ĕнер хула тулашĕнчи çырмара фашистсем асаплантарса вĕлернĕ совет гражданĕсен 16 виллине тупнă.

Хулари пурнăç ерипенех йĕркене кĕрсе пырать. Пекарньăсене юсаса ĕçе яраççĕ, çуртсене юсама бригадăсем тунă, ĕнер мунча ĕçлеме [illegible].

(«Правда», январĕн 23-мĕш).

## ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

# Цехри агитаци ĕçĕ

КАНАШ. (Хамăр корр.). Тăван çĕршывра тата унăн тулашĕнче пулса иртекен аслă событисем çинчен рабочисене вăхăтра тата тĕрĕс пĕлтерсе тăрасси—агитаторсемпе вулавçăсен кулленхи задачи. Çак задачăна вагонсем юсакан заводри агитаторсемпе вулавçăсем тивĕçлипех пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Агитаци ĕçне уйрăмăнах вагонсем тăвакан цехри рабочисем хушшинче авăн йĕркеленĕ.

Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче рабочисем цехри хĕрлĕ кĕтесе агитаци пунктне пухăнаççĕ. Агитпунктăн пÿлĕмĕ таса те культурăллă. Унăн стенисем çинче партипе правительство руководителĕсен портречĕсем, фронтпа Хĕрлĕ Çара пулăшма чĕнекен лозунгсем. Унтах, ялларах, çынçиен Гитлерпа унăн йыттисене питлекен карикатурăллă плакатсем.

Рабочисем пухăнса çитсен, агитатор сасси илтĕнсе каять. Вăл халь кăна илсе пынă хаçатсенчи çĕнĕ хыпарсене малтан вуласа, унтан ăнлантарса парать. Паттăр Хĕрлĕ Çар нимĕç оккупанчĕсенчен каялла туртса илнĕ хуласен ячĕсене асăнсан, вĕсене стена çумĕнче çакăнса тăракан карттă çинче кăтартать.

— Акă Керчь, акă Феодосия, — тет агитатор. — Вĕсем Крым çурутравĕн хĕвелтухăç енче лараççĕ.

Унтан агитатор çав хуласем тĕлне пĕчĕк хĕрлĕ флагсем тăрсе палăк тăратать. Рабочисем пĕрин хыççăн тепри пырса картта çине пăхаççĕ, пирĕн Хĕрлĕ Çар чăрсем малалла мĕнле куçса пынине пĕлесçĕ.

— Мухтавлă Хĕрлĕ Çар Гитлерăн [illegible] хăвăртрах хăваласа пытăр, çапса аркатăр тесен, пирĕн [illegible] планхинчен ытларах ĕçлемелле.

Агитатор хăйĕн большевикла чăн сăмахĕсене рабочисем умĕнче тăракан задачăсене çыхăнтарать, вĕсен çĕршыва фронт умĕнчи тивĕçлĕхĕсем çинчен асă илтерет.

Вăрçă пуçланнăранпа цехра агитаци ĕçне пĕр чарăнмасăр туса пыраççĕ. Агитаторсем вулавçăсем рабочисене кашни кунах Совет Информаци Бюровĕн сводкипе, фронтри боевой эпизодсене тата тыл ĕçсем çинчен те вуласа параççĕ.

— Агитаци ĕçне цехри производство командирĕсене парти работникĕсем те активлăн хутшăнаççĕ. Ертсе пыракан ĕçри коммунистсем ноябрь уйăхĕнче 6 лекцине доклад туса панă. Вĕсен тĕллевĕ, тĕпрен илсен, рабочисене Сталин юлташ докладне тĕплĕн ăнлантарса парасси, çулпуç сăмахĕсене кашни рабочи патне çитересси пулнă. Заводри пропагандистсем Сорокин юлташ «Камсем вĕсем национал-социалистсем» темăна калаçу туса иртерчĕ. Сталин юлташăн докладне ăнлантарса панă май, цехра Хĕрлĕ Çарăн отечественнăй вăрçăри ирĕке кăларакан миссийĕ çинчен, совет халăхĕн нимĕç оккупанчĕсене хирĕç пыракан кĕрешĕвĕн политикăллă-моральлĕ пĕрлĕхĕ çинчен, аслă демократиллĕ çĕршывсен Гитлерла Германие хирĕç çĕкленнĕ коалицийĕ çинчен лекцисем туса панă.

Декабрь уйăхĕнче вагонсем тăвакан цехра 6 лекци иртерĕç. [illegible] 29-мĕш номерлĕ вăтам шкул преподавателĕ Канова юлташ — Суворов çинчен, вагонсем тăвакан цех начальникĕ Трухин юлташ — Кутузов çинчен, вăтам шкул директорĕ Гавловский юлташ—Мининпа Пожарский çинчен лекцисем вуласа панă.

Нумаях пулмасть заводри вĕрену подразделенийĕн комиссарĕ Ковалев юлташ Хĕрлĕ Çарăн пысăк çĕнтерĕвĕсем çинчен каласа пачĕ. Хăйĕн калаçăвне вăл пурне те çар ĕçне вĕрентес ыйтупа тата çĕршыв оборонине тĕреклетес тĕлĕшпе рабочисем умĕнче тăракан задачăсемпе çыхăнтарчĕ.

Иккĕмĕш комплекс начальникĕ Шершонков, слесарь-бригадир Якушев, комсомолец-счетовод М. Андреев юлташсем те агитаци ĕçне активлăн хутшăнаççĕ. Андреев юлташ агитаци ĕçне конторăри служащисем хушшинче туса пырать. Юлашки эрнесенче вăл темиçе калаçу ирттернĕ, хаçатсем вуласа панă.

Цехком председателĕ Изотов юлташ—цехри старший агитатор. Вăлах—сменăри мастер. Изотов юлташăн сăмахĕ кулленхи ĕçсенчен нихăçан та уйăрăлмасть. Вăл, большевикла агитацие анлăн сарнипе пĕрлех, рабочисене лайăх ертсе пырать, вĕсене вĕрентсе ÿстерет. Чаплă бригадирсем, Рассказчиковпа Паранин юлташсем опытлă мастер Изотов ертсе пынипе ĕçлеççĕ. Вĕсен бригадисем сменăри заданисене тăтăшах 3—4 хут, хăшпĕр чухне 6—7 хут ирттерсе тултараççĕ. Слесарь-клепальщиксен Болтовпа Николаев юлташсем ертсе пыракан бригадисем те куллен 3—4-шар норма тăваççĕ, лайăх пахалăхлă продукци параççĕ. [illegible]

[illegible]

Т. ИВАНОВ.

# Коммунист ертсе пыракан цех

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). «Партизан» промысла артелĕн коллективĕ 1941 çулта начар мар ĕçлерĕ. Вăл хăйне панă задание ытлашшипех тултарчĕ.

Уйрăм цехсем ĕçре татах та паха тĕслĕхсем кăтартрĕç, кăтартаççĕ те. Ку шута чăн малтанах ВКП(б) кандидачĕ Василий Коровников юлташ ертсе пыракан çĕвĕ çĕлекен цех коллективĕ кĕрет. Çак цех 1941 çулти программăна 150 процент тултарнă. Çавăнпа пĕрлех унăн ĕç тухăçлăхĕ те чылай ÿснĕ, продукцин хăйне ларакан хакĕ йÿнелнĕ.

Цех коллективĕ лайăх ĕçлени, чăн малтанах, производство ĕçне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек организацилесе çĕнетнинчен килет. Рабочисемпе работницăсем пĕтĕм вăя, пуçарулăха усăллă ĕç тунă çĕре параççĕ. Вĕсем, кашни минутăпа туллин усă курса, материалсене перекетлесе, çĕршыв оборони валли ытларах продукци туса кăларассишĕн ырми-канми ĕçлеççĕ. Калăпăр, паян коллектив лайăх результат кăтартнă пулсан, ыран вара вăл татах та ытларах çитĕнÿ тума тăрăшать.

Цехра юлашки уйăхсем хушшинче кăна двухсотниксен хисепĕ темиçе хут ÿсрĕ. Вĕсенчен уйрăмах Квятковская, Герасимова тата Чиженкова юлташсене палăртмалла. Вĕсем виççĕшĕ те васкавлă заказсем тунă çĕрте ĕçлеççĕ, хăйсен нормисене ялан икĕ хут ытла ирттерсе тултараççĕ.

— Вĕсем ахаль тăнине нихăçан та кураймăн, пĕр минутăна та çухатмаççĕ. Çакă вĕсене çитĕнÿ тума пулăшать,—тет цех начальникĕ Коровников юлташ.

Нумаях та пулмасть цех коллективĕ васкавлă заказсем пурнăçа кĕртнĕ çĕрте ĕçлерĕ. Уйрăм рабочисем (Квятковская, Чиженкова т. ыт. те) 12—14 сехет хушши цехран тухмасăр ĕçлерĕç, ăмăрту нихăçанхинчен ытла анлăн сарăлса кайрĕ. Калас пулать, коллектив задание вăхăтра пурнăçларĕ. Туса кăларнă продукцин пахалăхĕ те пысăк.

Рабочисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе начар мар организацилеленĕ. Кăнтăрлахи апат çинĕ вăхăтра-и, е перерывсенче, кашни кун тенĕ пекех, вĕсене хаçатсем вуласа параççĕ, Совет Информаци Бюровĕ пĕлтерсе тăракан хыпарсемпе паллаштараççĕ. Цех начальникĕ Коровников юлташ час-часах калаçусем туса ирттерет. Çапла, сăмахран, нумаях пулмасть вăл хăйĕн цехĕнчи рабочисене Хĕрлĕ Çар туса пыракан çĕнтерÿсем çинчен каласа пачĕ. Ун хыççăн рабочисем татах та тимлĕрех ĕçлеме тытăнчĕç.

Çамрăк коммунист Коровников юлташ ĕçре малта пыракан рабочисен паха опычĕсене ытти рабочисем хушшине сарас тĕлĕшпе те куллен ĕçлет. Ку енĕпе вăл производствăллă канашлусем, калаçусем ирттерет. Çапла тунине пула халĕ цехра ĕçлекен рабочисем нормăна 115—200-шер процент тултараççĕ.

Хальхи вăхăтра цехра производствăллă çĕкленÿ татах вăйланчĕ. Рабочисемпе работницăсем, Хĕрлĕ Çар туса пыракан çĕнтерÿсемпе хавхаланса, январь уйăхне татах та лайăхрах результатсемпе вĕçлессишĕн кĕрешеççĕ.

Х. ЛИСИН.

# Ялхуçалăх ĕçĕсен 1942 çулти планĕ тата ăна пурнăçлас тĕлĕшпе тумалли мероприятисем

Германи фашизмне хирĕç пыракан отечественнăй вăрçă 1942 çулти ялхуçалăх умне халиччен хинчен чылай пысăк задачăсем кăларса тăратать. Отечественнăй вăрçă условийĕсенче ялхуçалăх продукцийĕ чылай нумайрах кирлĕ. Пирĕн фабрикăсемпе заводсем ялхуçалăхĕнчен чĕртавар нумайрах ыйтаççĕ, Хĕрлĕ Çар чылай йышлăланни ăна апат-çимĕç ытларах пама хушать.

Хĕрлĕ Çара лайăхрах хĕçпăшаллантарас, унăн техникине ÿстерсе çĕнетес енĕпе çине тăрса ĕçлемелле, ялхуçалăх продукчĕсем туса илессине кунран-кунах вăйлатса пымалла, промышленноçа чĕртавар ытларах туса парассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле. Çакăн пек халĕ партипе совет организацисен задачи.

Колхоз хресченĕсен патриотизмлă çĕкленĕвĕ халĕ çавтери пысăк. Вăл çĕкленÿ çĕнĕ, тĕлĕнмелле пысăк çитĕнÿсем тума пултаракан вăй пулса тăчĕ. Вăрçă пуçланиччен колхозсен руководителĕсенчен нумайĕшĕ хăйсем юлса пынине ĕç вăйĕ çитменнипе, туртăм вăйĕ сахаллипе ăнлантарса пама пăхатчĕç. Халĕ вара, вăрçă вăхăтĕнче, ялхуçалăх ĕçĕсем нимĕн чухлĕ те пĕчĕкленмен пулсан та, ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ нумайланман пулсан та, чылай колхозсенче ĕçсем ăнăçлăн пулса пыраççĕ. Мĕншĕн тесен халĕ кашни совет çынни пĕр шухăшпа пурăнать: тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен обязанноçĕсене вăхăтра пурнăçлассишĕн тата тăшмана пĕтерсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшассишĕн тăрăшса пĕтĕм вăйпа ĕçлет.

1941 çулта пирĕн колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисем ялхуçалăх ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем турĕç. Пĕрчĕллĕ тырăсен тухăçлăхĕ 1940 çултипе танлаштарсан чылай ÿсрĕ. Кăçал эпир чылай нумай тĕштырă туса илтĕмĕр. Кĕрхи тырăсене планран ирттерсе 23 пин гектар акса хăвартăмăр.

Колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн йышĕ чылай ÿсрĕ. Мăйракаллă шултăра выльăхсен шучĕ 25 процент ытла, сыснасен йышĕ 52 процента яхăн, сурăхсен йышĕ 32 процента яхăн ÿсрĕ. Нумай колхозсем кашни гектартан çĕршер пăт тĕштырă туса илчĕç. Фермăсенче ĕçлекенсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăх туса пынă май, ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх тырă илеççĕ.

ССР Союзĕн Совнаркомĕ тата пирĕн партин Центральнăй Комитечĕ хушнине пурнăçласа, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ 1942 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе практикăллă мероприятисем палăртса хучĕç.

### I

Тăшман пирĕн çĕршывăн хăшпĕр районĕсене вăхăтлăха тытса илчĕ. Çав çухатăва пирĕн хамăрăн çĕр çинче туса илнĕ тырăпа витмелле. Çĕршыва, Хĕрлĕ Çара апат-çимĕç продукчĕсем ытларах туса парасси тата промышленноçа чĕртавар хатĕрлесе парасси халĕ колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисен пысăк тата ответлă задачи пулса тăрать.

1942 çулта пирĕн уйрăмах йĕтĕнкантăр, кĕрпе тумалли тырăсем тата пахча-çимĕçпе çĕрулми чылай нумайрах туса илмелле. Кунсăр пуçне кăçал пирĕн çĕнĕ культурăсем, оборона валли питех те кирлĕ культурăсем акса çитĕнтермелле. Вăл шута кок-сагыз тата эмел курăкĕсем кĕреççĕ. Çак культурăсем пирĕншĕн çĕнĕ-ха. Вĕсене акса ÿстерес ĕçре пирĕн опыт çук. Çавăнпа та вĕсен агротехникине вĕренме пирĕн халех тытăнмалла, вĕсене акма çĕр лаптăкĕсем хатĕрлемелле. Çак ĕçе йĕркеллĕн, тимлĕн туса пырсан, паллах, кăçал пирĕн колхозсем, çĕршыва тырă тата пахча-çимĕç нумай туса панипе пĕрлех, техникăллă культурăсене те нумай хатĕрлесе пама пултараççĕ.

Çĕрулми лартас план, иртнĕ çултипе танлаштарсан, кăçал 31 процент ÿсет. Пахча-çимĕç, уйрăмах çĕрулми лартас план пысăккăн ÿсни промышленность валли чĕртавар нумайрах туса пама кирлинчен тухса тăрать. Çак пысăк задачăна пурнăçлассишĕн пирĕн колхозсен кăçал пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле пулать.

Выльăх апачĕ тума курăксем акас план кăçал иртнĕ çултинчен 40 процент ытла ÿсмелле. Колхозсен обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕ йышлăн ÿссе пырать. Çавăнпа курăксем акас плана та нумай ÿстермелле. Обществăллă выльăх-чĕрлĕхе малалла ÿстерме тата унăн продуктивноçне хăпартма выльăх апачĕн базине вăйлатмалла. Тепĕр енчен, курăксем акса туни пирĕн пусу çаврăнăшне йĕркелесе пыма лайăх услови туса парать.

Иртнĕ çултипе танлаштарсан, кăçал тырăсем тата ытти культурăсемпе пахча-çимĕçсем акăнмалли çĕр лаптăкĕ 47 пин гектар нумайрах пулать. Техникăллă культурăсем, курăксем тата пахча-çимĕçсемпе çĕрулми акмалли план чылай нумай ÿснĕ пирки, пĕрчĕллĕ тырăсем акас план пĕчĕкленет. Пĕрчĕллĕ çуртыррисем кăçал иртнĕ çултинчен 21 пин гектара яхăн сахалтарах акăнаççĕ. Хура пусăсем йышăнакан çĕр лаптăкĕ те чылай пĕчĕкленет.

Умра тăракан пысăк ĕçсене ăнăçлăн пурнăçлас тесен, пирĕн чи малтан вăрлăх хатĕрлес ĕçе татса парас пулать. Кашни колхозăн, кашни районăн çураки планне тултарма кирлĕ вăрлăха çителĕклĕ таран хатĕрлес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелле. Анчах, калас пулать, вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе халĕ эпир питех те çителĕксĕр ĕçлетпĕр. Авăн çапас ĕç чылай çĕрте вăраха чăсăлса пыни вăрлăх фончĕсене тума та кансĕрлет. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ пĕлтернĕ тăрăх, вăрлăх хатĕрлес плана эпир халĕ çуррине яхăн çеç пурнăçланă. Вăрлăха тасатас ĕç те çителĕксĕр пулса пырать.

Нумай колхозсем çак ответлă ĕçе пурнăçлама тивĕçлипе тытăнман-ха. Ишлей районĕнче клевер вăрлăхне планпа пăхнинчен 6 процентне çеç çапса хунă. Нумай культурăсен вăрлăхĕсем çитмеççĕ. Çапла пулсан та, районри çĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем колхозсене сахал пулăшаççĕ, çитменлĕхсене вăхăтра курмаççĕ. «Искра» колхозра вăрлăхлăх сĕлле шăтăк тăрăллă кĕлете хывса шыв антарнă. Сĕлĕ вăрлăхĕ хăйĕн шăтас пахалăхне йăлтах çухатнă.

Сортлă тырра кăçал пĕтĕмпех вăрлăх фондне хумалла. Колхозсем хушшинче вăрлăхлăх тырăсене пĕр-пĕринпе улăштарас ĕçе организацилемелле. Çураки пуçланиччен кашни колхоз хăй валли сортлă вăрлăх хатĕрлесе çитермелле.

### II

Агротехника мероприятийĕсене тĕрĕс пурнăçа кĕртни вăйлă тырпул туса илмелли иккĕмĕш услови пулса тăрать. Вĕсене колхозсем мĕн чухлĕ лайăхрах пурнăçа кĕртеççĕ, çавăн чухлĕ пысăкрах тухăçлă тырпул туса илеççĕ. Хăшпĕр колхозсен руководителĕсем: вăрçă условийĕсенче агротехника мероприятийĕсене анлăн тума май çук, теме пăхаççĕ. Çавăнпа та кăçал агротехника мероприятийĕсене пурнăçлассишĕн питех те тăрăшмасан та юрать пулĕ, теççĕ. Çакăн пек шухăш вăл сиенлĕ тата хальхи вăхăтра ăна тÿсме çук. Пачах урăхла, халĕ çĕршыва ялхуçалăх продукчĕсем нумай кирлĕ пулнă вăхăтра, агротехника мероприятийĕсене пурне те пĕтĕмпех пурнăçламалла, вырăнти ресурссемпе пуринпе те анлăн усă курмалла.

Кăçал пирĕн агротехника тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттермелле. Икĕ миллион тонна тислĕк хатĕрлемелле, вăл шутран 1500 тонна тислĕк хĕллехи вăхăтра кăлармалла. Кунсăр пуçне уйхирсене 800 пин тонна торф кăлармалла, 80 пин центнер кĕл, 50 пин центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмалла, 135 пин тонна известь хатĕрлемелле. Минераллă удобренисене те нумай хатĕрлеме палăртнă.

Тырăсене, пахча-çимĕçе яровизацилес ĕç анлăн пулса пымалла. 100 пин гектар çине пĕрчĕллĕ тырăсем, 6 пин гектар çине çĕрулми яровизацилесе акмалла. 200 пин гектар çинче юр тытса хăвармалла, вĕсенчен 28 пин гектар çинче юра щитсемпе тытмалла.

Тума палăртнă ĕçсен калăпăшĕ пысăк пулсан та, ăна пирĕн пурнăçламаллах, мĕншĕн тесен агротехника мероприятийĕсене ăнăçлăн пурнăçлани вăл — вăйлă тырпул туса илес ĕçĕн никĕсĕ пулса тăрать.

Колхозниксен патриотизмлă çĕкленĕвĕпе тĕрĕс усă курма пĕлсен, ĕççыннисен фронта ытларах пулăшас кăмăлне çĕклесе пырсан, эпир кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене лайăх пурнăçлама пултаратпăр, тырпул тухăçне планпа пăхнă чухлĕ çеç мар, унтан нумайрах туса илсе çĕршыва ялхуçалăх продукчĕсем ытлашшипех туса пама пултаратпăр.

### III

Тракторсемпе ытти машинăсене юсас ĕçе хамăрăн вырăнти пĕтĕм ресурссене мобилизацилесе туса пымалла. Çакна шута илсе, эпир машинăсен запаслă чаçĕсене вырăнти предприятисенче, машинно-тракторнăй мастерскойсемпе станцисенче юсас тата çĕнĕрен тăвас ĕçе йĕркелеме план турăмăр. Ку план тăрăх, пирĕн вырăнти хăшпĕр предприятисен ялхуçалăх машинисен чаçĕсене тумалла. Предприятисен руководителĕсем ялхуçалăх машинисен чаçĕсене тăвас заданине хăвăрт пурнăçлама тивĕç.

Ялхуçалăх машинисен запаслă чаçĕсене вырăнти предприятисенче çĕнĕрен тунипе пĕрлех, машинно-тракторнăй станцисен кивĕ чаçĕсене юсаса çĕнетес ĕçе анлăн организацилемелле. МТС директорĕсен тракторнăй парк валли запаслă чаçсем çителĕклĕ тăратассишĕн тимлĕн тăрăшмалла. Машинăсем юсас ĕçре рационализаторла сĕнÿсем пухассине организацилемелле, тракторсене, комбайнсене тата ытти машинăсене пысăк пахалăхпа юсамалла.

Машинно-тракторнăй станцисем кăçал тракторсене, ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе вăхăтра тытăнчĕç. Ишлей районĕнчи машинно-тракторнăй станци тракторсем юсас тĕлĕшпе 1941 çулти IV-мĕш квартал планне ăнăçлăн пурнăçларĕ. МТС руководителĕсем машинăсен запаслă чаçĕсене вăхăтра хатĕрлесе хунă. Çитмен чаçсене тунă, юсаса çĕнетнĕ. Машинăсемпе тракторсене юсас ĕç Вăрнар, Елчĕк, Комсомольски, Чкаловски, Элĕк районĕсенче те лайăх пулса пырать.

1942 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене пурнăçланă çĕрте машинно-тракторнăй станцисен кăçал колхозсене вăйлăн пулăшмалла пулать. Вĕсен ĕçĕнче кăçал нихăçанхинчен çирĕп йĕркелĕх, дисциплинăлăх, оперативность пулмалла. Мĕншĕн тесен кăçал ялхуçалăх умне пысăк та ответлă задачăсем лартнă, тепĕр енчен, машинно-тракторнăй станцисенче те, колхозсенче те çĕнĕ кадрсем чылай, вăл кадрсене ĕçре вĕрентсе пырас пулать. Çаксене шута илсе, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ машинно-тракторнăй станцисенче политотделсем тума йышăннă. Машинно-тракторнăй станцисенчи политотделсен тĕп задачи—çĕнĕ кадрсене ĕçре вĕрентсе воспитани парса пырасси, производствăри çитменлĕхсене пĕтерме массăна мобилизацилесси, машинно-тракторнăй станцисемпе колхозсен пĕтĕм ĕçне çĕклесе лайăхлатасси пулса тăрать. Политотделсем машинно-тракторнăй станцисенче политикăллă ĕçе анлăн туса пыракан органсем пулса тăраççĕ; вĕсен политикăллă агитаципе пропаганда ĕçне рабочисем, служащисем, колхозниксем хушшинче вăйлăн туса пымалла, вĕсен пĕтĕм ĕçе фронта пулăшас, ялхуçалăх задачисене пурнăçлассишĕн кĕрешме колхозниксен пĕтĕм массине çĕклес енĕпе туса пымалла.

Тракторпа тумалли ĕçсем кăçал иртнĕ çулхинчен чылай нумайрах. Кашни 15 лаша вăйлă трактор вăтам шутпа 420 гектар çĕр лаптăкĕ çинчи ĕçсене тумалла. Çураки вăхăтĕнче кашни трактор пуçне 95 гектар тивет. Кашни комбайн 190 гектар çинчи тырпула пуçтармалла, кашни сеялкăпа 140 гектар çинче тырă акса хăвармалла. План пысăк, анчах ăна пирĕн пурнăçламаллах.

МТС директорĕсемпе районсенчи çĕрĕç пайĕсен колхозсенче тракторпа тумалли ĕçсене тĕплĕн палăртмалла. Аçта лаша вăйĕ сахалтарах, унта тракторпа ĕçлесе пулăшмалла. Тракторнăй парк вăйне тĕрĕс вырнаçтармасан, эпир çуракине кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерме пултараймастпăр.

Кăçал машинăсемпе ĕçлеме чылай çĕрте çĕнĕ çынсем тăраççĕ. Нумайĕшĕ вĕсенчен хĕрарăмсем. Çакă ĕнтĕ МТС директорĕсемпе политотделсене кадрсен ĕç условийĕ çинчен, вĕсен ĕçне организацилесси çинчен халех шутласа пăхма хушать. Кашни трактор бригадинех уйра пурăнса, ĕçлеме будкăсем туса памалла, трактористсене апатлантарас ĕçе лайăх организацилемелле, бригадăсенче политикăллă-массăллă ĕçе анлăн туса пымалла, техника тĕлĕшĕнчен пулăшу парса тăмалла.

Тракторсемпе машинăсем валли бензин, краççин тата сĕрмелли материалсем турттарма халех хатĕрленес пулать.

### IV.

Колхозсене, машинно-тракторнăй станцисене ертсе пырас ĕçе çĕнĕ кадрсем килчĕç. Çак кадрсене ĕçре вĕрентсе пырса политикăллă воспитани парас пулать. Анчах, калас пулать, çак ĕç çине районсенчи руководительсем, уйрăмах районсенчи çĕрĕç пайĕсен заведующийĕсемпе МТС директорĕсем, çителĕклĕ таран çаврăнса пăхмаççĕ-ха. Ĕçе халь çеç тăнă çĕнĕ работниксене ĕçре куллен пулăшса пыни кирлĕ. Çакна тума пирĕн хăшпĕр работниксем час-часах манса каяççĕ. Час-часах çакăн пек пулать: çĕнĕ ĕçе куçарса лартнă чухне работнике ĕçре вĕрентсе, пулăшса пыма пулаççĕ; ĕçе тытăнсан вара вăл работник çинчен йăлтах манса каяççĕ. Çĕнĕ работник ĕçре хăнăхайман пирки кая юлма пуçласан: унтан нимĕн те тухмарĕ, теççĕ. Хальхи вăхăтра кадрсене воспитани парса çитĕнтерес ĕçе уйрăмах тимлĕн тăвас пулать. Вĕсене ĕçлеме вĕрентес пулать, мĕн тумаллине кăтартса ăнлантарас пулать, çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтерме хăнăхтарас пулать. Çапла тусан çĕнĕ кадрсем ĕçе пултăруллăнрах тума пуçлаççĕ, дисциплинăна хăнăхаççĕ тата хăйсене шанса панă ĕçĕн ответлăхне туйса ĕçлеççĕ.

Кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе уйрăмах машинно-тракторнăй станцисенче пысăк ĕç туса ирттермелле. Хĕллехи вăхăтпа туллин усă курса, механизаторла кадрсем нумайрах хатĕрлес пулать. Ку ĕçе çиелтен пăхса мар, тĕплĕн туса пымалла, курссенчен лайăх кадрсем вĕрентсе кăларас пулать. Курсран вĕренсе тухнă тракторист, комбайнер хăйĕн ĕçне тĕплĕн пĕлтĕр, хăйне шанса панă машинăна вăл юраттăр.

Кăçал пирĕн механизаторла кадрсем шкулсенче—577 çын, МТС-сенче—1500 çын, хăйсем тĕллĕн 242 çын вĕрентсе хатĕрлемелле. План пысăк, анчах пирĕн ăна пурнăçламалла. Кунпа пĕрлех ялхуçалăх машинисемпе, тракторсемпе, комбайнсемпе ĕçлеме çĕрĕç органĕсенче ĕçлекенсен те вĕренмелле.

Йышлăн ÿссе пыракан обществăллă выльăх-чĕрлĕхе пăхса усрама та кадрсем нумай кирлĕ. Çавăн пекех тата колхоз председателĕсем, уйхир ĕçĕсен бригадирĕсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри бригадирсем пулса ĕçлеме те курссенче нумай çынсене вĕрентсе кăлармалла.

Колхозсене массăллă квалификациллĕ кадрсем нумай кирлĕ. Вĕсем кашни колхозрах кăçал йышлăн ĕçлемелле. Планпа пăхнă тăрăх, пирĕн кăçал кĕске срокла курссенчен яровизаторсем тата химизаторсем—1679 çын, звеньевойсем: йĕтĕн енĕпе — 420 çын, кантăр енĕпе — 720 çын, махорка ÿстерес тĕлĕшпе—400 çын, кок-сагыз культурипе—450 çын, колхозри агротехниксем—1050 çын, машиноведсем—2045 çын, пахча-çимĕç ĕçĕпе—600 çын, садсем ÿстерес тĕлĕшпе—400 çын тата ыттисене те вĕрентсе хатĕрлемелле. Çак ответлă ĕçе политотдел начальникĕсен, МТС директорĕсен тата çĕрĕç пайĕсен заведующийĕсен хăйсем çине илмелле. Курссен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăрсан çеç эпир кадрсем хатĕрлес плана кăçал ăнăçлăн пурнăçлама пултаратпăр. Колхозсенче агротехникăна вĕренес ĕçе анлăн организацилемелле, уйрăмах хĕрарăмсене ытларах вĕрентмелле.

### V.

Пуриншĕн те паллă, пирĕн колхозсенче халĕ, иртнĕ çултисемпе танлаштарсан, çынсем те, лашасем те сахалрах.

Çак условисенче ĕçлеме пултаракан кашни çын, кашни лаша ялхуçалăх ĕçĕнче паллă вырăн йышăнса тăмалла. Ĕçе тĕрĕс организацилесен, звеносемпе ĕçлессине ĕçре тĕп вырăна хурсан, колхозсен канцелярийĕсенче тата управлени аппаратĕнче ĕçлекен çынсен шутне чакарсан, колхоз производствине çÿле çĕклеме пулать. Ялхуçалăх ĕçĕсен калăпăшĕ пысăкланса пыни кашни колхоз ĕçне уйрăмăн планласа йĕркелеме кирлине кăтартать. Колхозсен вырăнти ресурсĕсене шута илсе, çынсен вăйне тата лашасен вăйне тĕрĕс палăртса, кăçал кашни çын, кашни лаша мĕн чухлĕ ĕçлемеллине палăртса хурас пулать. Ĕçе çавăн пек организацилесе, пирĕн колхозсен кăçалхи çуракинче пĕрчĕллĕ çуртыррисене те, техникăллă культурăсене те вăтам шутпа 14 кун хушшинче акса хăвармалла. Çавăнпа колхозсен акмалли çĕр лаптăкĕсене тимлĕн сăнаса тăрас пулать, ăçта çĕр юр айĕнчен иртерех тухса типет, вăл лаптăксене суйласа илсе хăвăртрах акса хăвармалла.

Хăшпĕр районсенче лаша вăйĕпе пĕрлех вăкăрсен, хĕсĕр ĕнесен, икĕ çултан иртнĕ тихасен вăйĕпе те усă курассине организацилемелле. Вĕсене кÿлĕнсе çÿреме халех вĕрентмелле, кÿлмелли хатĕрсене хатĕрлемелле.

Ĕç ăнăçлă тата йĕркеллĕ пулса пытăр тесен, кашни колхозник çураки вăхăтĕнче мĕнле ĕçре пулмаллине халех палăртса хумалла. Çуракинче хăш лашапа мĕнле ĕç тумаллине тата унпа хăш колхозник ĕçлемеллине те паллă туса пымалла, техника тĕлĕшĕнчен пуйĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, кашни колхозăнах лашасене çуркуннехи ĕçсем валли хатĕрлеме тытăнмалла. Лашасене уйрăмах тимлĕн пăхса тарантарас, мăнтăрлатас ĕçе çуракиччен организацилемелле.

Çуракинчи ĕçсене халех тĕплĕн планласа хурсан тата вăл ĕçе тума тĕплĕн хатĕрленсе çитсен, эпир çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттерме пултаратпăр, çапла вара пысăк тухăçлă тырпул туса илес ĕçĕн никĕсне хуратпăр.

* * *

1942 çулти задачăсене пурнăçлас ĕçре çĕрĕç органĕсен чăн-чăн организаторсем пулса тăмалла, пĕтĕм ĕçе большевикла организацилесе ирттермелле. Çĕрĕç органĕсен пĕтĕм ĕçĕнче татăклă улшăну тумалла, çĕрĕç пайĕсен заведующийĕсемпе МТС директорĕсен ĕçри авторитетне хăпартмалла, вĕсен аппарачĕсен ответлăхне ÿстермелле.

Политотделсем организацилени çĕрĕç органĕсен ĕçне вăйлатма пулăшать. Вăл çĕрĕç органĕсене, машинно-тракторнăй станцисене колхозсем çывăхнерех, трактор бригадисем çывăхнерех илсе пырать. Политотделсем колхозсене ĕç дисциплинине çирĕплетме пулăшĕç, МТС директорĕсене, çĕрĕç пайĕсене ĕçре оперативнăрах, конкретнăрах пулăшса пырĕç.

Парти организацийĕсем, МТС политотделенийĕсен, советсемпе колхозсем пĕтĕм вăйне кăçал ялхуçалăх умĕнче тăракан задачăсене кăтартуллăн пурнăçлас ĕçе хумалла. Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă аслă уява çуракине пур енĕпе те лайăх хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илмелле. 1942 çулта татах та ытларах тырпул туса илсе, тăшмана тĕппипех пĕтерсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшар.

# Хĕрсех хатĕрленеççĕ

Шупашкар районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз çуракине хĕрхуннех хатĕрленме тытăннă. Ку тĕлĕшпе паянхи куна нумай паха ĕçсем тунă та ĕнтĕ.

Вăрлăхсем сортлă, таса. Халь пăрçа вăрлăхне тасатса пĕтереççĕ.

Çĕре çемçетме кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 50 центнер, кĕл 75 центнер пухнă. Кунсăр пуçне колхозниксем хăйсен килĕсенчен уя 250 лав тислĕк кăларчĕç.

Уйрăмăнах колхоз лашасене лайăх пăхса усрать. Лашасене пурне те рационпа çитереççĕ. Çураки вăхăтĕнче çитерме сĕлĕ те çителĕклĕ хатĕрлесе хунă.

М. СМЕТАНИН.

# Совет Информаци Бюровĕнчен

## Январĕн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 23-мĕшĕнче пирĕн войскăсем малалла куçса пынă. Нимĕç войскисем уйрăм участоксенче контратакăсем туса совет войскисене малалла куçмашкăн чарма хăтланнă, анчах çав контратакăсем ăнăçсăр пулнă. Пирĕн войскăсем пыра-пыра çапнипе противник каялла чакнă, çапăçу хирĕнче хĕçпăшалсене тата хăйсен вилнĕ тата аманнă салтакĕсемпе офицерĕсене нумай пăрахса хăварнă. Пирĕн чаçсем халăх пурăнакан темиçе пункта, вăл шутра **Пено, Андреаполь, Холм, Торопец, Западная Двина** хулисене, тытса илнĕ.

Январĕн 22-мĕшĕнче нимĕçсене 23 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 8 самолет пĕтнĕ.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем противникăн 3 транспортне путарнă, вĕсенчен пĕри 2.000 тонна, теприи — 3.000 тонна, виççĕмĕш — 8.000 тонна водоизмещениллĕ пулнă.

* * *

Январĕн 22-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 3 танкне, пехотăпа грузсем турттарса пыракан 350 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 350 ытла лавне, 14 орудине прислугисемпе пĕрлех, зенитнăй пулеметсен 16 точкине пĕтерсе тăкнă, грузсем тиенĕ 5 вагона сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи 2 эшелона вут тивертнĕ, противник пехотин пĕр полкне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Гетман юлташăн танковăй чаçĕ (Хĕвеланăç фрончĕ), противника хирĕç пĕр кун хушши çапăçса, халăх пурăнакан 5 пункта нимĕçсенчен хăтарнă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 500 çын ытла пĕтнĕ. Тепĕр участокра Якимов юлташăн стрелковăй чаçĕ халăх пурăнакан питĕ кирлĕ пункта йышăнса илнĕ. Çав пункт патне пымалли çулсем çинче нимĕç салтакĕсен 200 вилли ытла выртса юлнă.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть халăх пурăнакан 7 пункта нимĕçсенчен ирĕке кăларнă, 13 оруди, 17 станковăй пулемет, миномет, радиостанци тата боеприпассем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Кузнецов лейтенант нумаях пулмасть разведкăра фашистсен офицерне вĕлерне те унăн мотоциклне тытса илнĕ. Колышево ялĕшĕн пынă çапăçура Кузнецов юлташ тăшманăн 10 салтакне тата тепĕр офицерне вĕлернĕ.

* * *

Ш. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ, Мускав облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, противникăн тылĕнче çапăçса нимĕçсенне боеприпассем тиенĕ 15 лав тата мотоцикл пĕтерсе тăкнă, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 44 çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Партизансем 3 гитлеровеца тыткăна илсе Хĕрлĕ Çар чаçне пырса панă.

* * *

Нимĕçсен артиллерин 209-мĕш полк штабĕн, пирĕн чаçсем çапса çĕмĕрнĕскерĕн, ĕçĕсем хушшинче нимĕçсен 29-мĕш армейски корпусĕн командирĕ кăларнă 1348-мĕш номерлĕ вăрттăн приказăн копине тупнă. Çав приказра çапла каланă: «Пĕр подразделение хваттерсем тăрăх вырнаçтарнă чухне хваттерсенчи стенасем çинче çакăн пек çырнă сăмахсем тĕл пулнă: «Эпир Германие таврăнасшăн», «Пире кун чухлĕ курни çитет», «Эпир хуралса пĕтнĕ, пыйтланса кайнă, киле каяс тетпĕр», «Эпир ку вăрçа вăрçасшăн пулман». Çак хваттерсенче ку подразделение вырнаçтарма пуçличчен урăх подразделени тăнă.

Тата пĕр рота командирĕ тепĕр офицерпа сăмахланă чухне çакăн пек шухăша калама хăйнă: тĕнче вăрçи вăхăтĕнче апат турттарса пырас ĕç нихăçан та хальхи пек начар пулман, халĕ пирĕн çиме те нимĕн те çук, ун чухне çырусем те нихăçан та çухалман. Çав командирах малалла çапла каланă: унăн роти çавтери япăхса çитнĕ, унпа наступлени тума та, каялла чакма та май çук.» Малалла приказра вăрçа хирĕçле шухăшсене пĕтерме, салтаксене пур çитменлĕхсене те тӳсе ирттермелле тума хушнă.

Гитлерла генералăн приказĕ татах та тепĕр хут çакна кăтартса парать: Совет çарĕ пырса çапнипе Гитлер войскисенчи салтаксен кăна мар, офицерсен те шухăш-кăмăлĕсем хăварт пăсăлса пыраççĕ.

* * *

Варюшино ялĕнчен (Калинин облаçĕ) тухса кайнă чухне нимĕç варварĕсем 26 çынна персе пăрахнă, вăл шутра 3 çултан пуçласа вунвиççе кайнă 10 ача пулнă. Темиçе ачана йывăр амантнă. Вĕсем хушшинче Т. Петрова — 13 çултискер, Н. Петрова — 3 çултискер, Н. Моисеева — 11 çултискер, А. Моисеева — 12 çултискер пулнă.

## Январĕн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пăрахса, халăх пурăнакан С. пункта йышăнса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 230 çынна вĕлернĕ. Трофейăсем: 3 оруди, 5 пулемет, 4 миномет, 16 автомашина, радиостанци тата 5 кухня тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче кĕрешекен пирĕн часть пĕр кун хушшинче нимĕçсенне 33 оруди, 24 пулемет, 10 миномет, 53 автомашина, 10 раци, 21 мотоцикл, продовольствипе тĕрлĕ япаласен склачĕсем тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ. Гитлеровецсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.700 çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Тыткăна илнисем те пур.

* * *

Балтика флочĕн тинĕс хĕрринчи оборонин батарейи пĕр кун хушшинче тăшманăн çĕрпе йывăçран тунă 2 огневой точкине пĕтерсе тăкнă, темиçе блиндажа аркатнă тата противник артиллерин 9 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Пирĕн разведчиксем (Ленинград фрончĕ)—старшинасем Лошкаревпа Кошевой, кĕçĕн сержантсем Федипа Колобухов юлташсем противник тăнă вырăна çĕмĕрсе кĕнĕ те нимĕçсен 40 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ. Противникăнне станковăй пулемет, миномет, 30 мина тата паха документсем тытса илнĕ хыççăн разведчиксем хăйсен чаçне тĕрĕс-тĕкел таврăннă.

* * *

Пирĕн 6 боец, Панов красноармеец ертсе пынипе, Кашинка ялĕшĕн пынă çапăçура нимĕçсен тылне кĕрсе кайнă та тăшманăн 4 станковăй пулемечĕн расчечĕсене, пирĕн наступлени тăвакан подразделени çине персе тăраканскерсене, пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украинăн нимĕçсем тытса илнĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен И. юлташăн партизанла отрячĕ гитлеровецсем вырнаçнă çурта сирпĕнтерсе янă. Тепĕр кунне партизансем нимĕçсен çар грузĕсем турттарса пыракан 3 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Чугунçулăн партизансем минăсем лартса тухнă участокĕсенче 3 кун хушшинче 4 состав сирпĕнсе кайнă.

* * *

Гитлерла командовани нимĕç войскисене хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе йăнăш туни çинчен Совет Информаци Бюровĕн сводкинче пĕлтернĕччĕ. Çавăн пек йăнăш тунине пула халĕ нимĕçсен пиншер салтакĕсем вырăс çĕршывĕнче шăнса хăйсен вилĕмне тупрĕç.

Нумаях та пулмасть пирĕн чаçсем нимĕçсен 9-мĕш армин командованийĕ панă распоряжение тытса илнĕ. Çав распоряжени нимĕçсен çарĕнче хĕллехи тумтирсем мĕн чухлĕ пулнине питĕ лайăх кăтартса парать: «Кашни дивизири кашни 10 çын валли нагрудникпе наспинник уйăрса памалла. Ку тумтирсене чи малти линири салтаксемпе постра тăраканнисене çеç памалла».

* * *

Финсен 25-мĕш полкĕнчи 10-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Отто Аалто çапла каласа панă: «Пирĕн полкăн 3-мĕш батальонĕнчен 40 салтак ытла тарнă, вĕсенчен 20 салтака çеç тытнă. Çав батальонăн пулемет ротине вăл наступлени тăвасси çинчен панă приказа пурнăçа кĕртменшĕн салатса ярса çĕнĕрен йĕркеленĕ. Ротăри салтаксенчен чылайĕшне тыла куçарнă, нумайĕшне арестлесе тĕрмене хупса лартнă».

* * *

Нимĕçсен ефрейторĕ Мартин Фогель çумĕнче Германири Аугустусбург ялĕнчен Отто Фени янă çырăва тупнă. Фени çапла çырать: «Пирĕн ял çыннисенчен Российăра 20 çын вилсе пĕтнĕ. Ку ĕнтĕ питĕ пысăк хуйхă!».

* * *

Германи çарĕн Польшăра тăракан чаçĕсем хушшинче сыпной тиф питĕ сарăлса кайнă. Варшавăра, Лодзьре, Львовра тата ытти хуласенче те сывмар салтаксене вырнаçтармашкăн оккупациллĕ влаçсем çĕршер çуртсене туртса илнĕ. Медикаментсем çитмен пирки тата апат-çимĕç питĕ начар пулнă пирки тифпа чирлекеннисенчен нумайĕшĕсем вилеççĕ.

* * *

Вăрçă пуçланнăранпа Грузири промышленность предприятийĕсене вăтă рабочисем нумайĕшĕсем производствăна каялла таврăннă. Вĕсем хăйсен ĕçĕпе гитлерла захватчиксене хăвăртрах аркатса тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшасшăн тăрăшаççĕ. Тбилиси хулинчи квалификациллĕ токарьсем, слесарьсем тата фрезеровщиксем 150 çын çамрăк рабочисене производство специальноçĕсене вĕренме пулăшаççĕ.

# Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсене — ăшă тумтирсем

СОВЕТСКОЕ. Нумаях пулмасть пулса иртнĕ хăйсен пĕрлешӳллĕ пухăвĕнче Юрмейкенăри Чапаев ячĕпе тăракан колхоз членĕсем тăван çĕршыва паттăррăн хӳтĕлекенсем валли ăшă япаласем пухса парасси çинчен сӳтсе-яврĕç. Вĕсем ку тĕлĕшпе татах та паха мероприятисем туса ирттерме палăртрĕç.

Колхозниксем пурте, пĕр шухăш-кăмăллă пулса, колхозăн пĕрлешӳллĕ фондĕнчен 5 кĕрĕк пиншак, 10 мăшăр çăматă, 20 мăшăр алшишсемпе перчаткăсем, 10 мăшăр носкисемпе чăлхасем пама йышăнчĕç. Кунпа пĕрлех кашни колхозник аялтан тăхăнмалли пĕрер мăшăр кĕпе-йĕм тата ытти ăшă япаласем парать.

Кунти колхозниксем малтанхи вăхăтра та боецсем валли ăшă япаласем чылай пухса панă. Хĕрлĕ Çар кунранкун туса пыракан çĕнтерӳсем вĕсене çак ĕçе татах та ытларах вăйлатма хавхалантараççĕ.

**Як. СИГАЙ.**

* * *

ЭЛĔК. Пирĕн аслă полководец тата юратнă çулпуç Сталин юлташ фронта пур майпа та пулăшма чĕнсе каланине ĕççыннисем пысăк хастарлăхпа пурнăçласа пыраççĕ.

Фашистсене тĕппипех çапса салатас çула, 1942 çула, кĕнĕренпе Хĕрлĕ Çар боецĕсене ăшă тумтирсем парса пулăшасси татах та вăйланчĕ.

Элĕк ялсоветне кĕрекен колхозсем иртнĕ çулти ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче 148 килограмм çăм, 89 тир, 8 ваткăллă шалавар, 5 фуфайка, 4 мăшăр çăматă тата алшишсемпе ăшă чăлхасем чылай çыхса фронтри боецсем валли ярса панă. Çак кунсенче колхозниксем боецсем валли тата 22 тир, 5 мăшăр çăматă, ăшă кĕпесем, мулаххайсем, чăлхасем чылай ярса пачĕç.

Ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ялсовет председателĕ комсомолка М. Волкова юлташ колхозниксем хушшинче массăллă-ăнлантаруллă ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Волкова юлташ хăй оборона фондне пĕр ăшă кĕпе, пĕр мулаххай, пĕр мăшăр чăлха панă. Боецсем валли вăл татах пĕр ваткăллă шалавар пачĕ.

Çавăн пекех Урмай колхоз председателĕ В. Нилов, Синер колхоз председателĕн заместителĕ И. Петриков юлташсем те çак кунсенче пĕрер мăшăр çăматă тата пĕрер мулаххай панă.

Мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе районри ытти колхозсенче те сарăлсах пырать.

**М. ЯСТРАН.**

# Машинăсене юсамалла, вăрлăхсене сортламалла

КАЛИНИНО. Районра халь малта пыракан колхозсем çуракине хатĕрленес ĕçе тимлĕн тытăнчĕç. Коммунист П. Ситов ертсе пыракан Кăмпалри «Новый путь» колхоз ялхуçалăх машинисене йăлтах юсанă, вăрлăх фондне çителĕклĕ таран хатĕрлесе, вăрлăха икĕ хутчен сортланă. Кунпа пĕрлех асăннă колхозра 32 гектар çинче юр тытнă.

Чулкаçри «Смычка» колхоз та (председателĕ коммунист П. А. Ландышев юлташ) çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе паха тĕслĕхсем кăтартать. Колхоз çуракине ирттерме çирĕп план тунă. План тăрăх колхозăн 18 гектар çине тулă, 10 гектар çине урпа тата 74 гектар çине сĕлĕ акса хăвармалла. Асăннă культурăсен вăрлăхĕсем колхозăн çителĕклĕ, вĕсене пурне те сортласа хунă: тулă 40 центнер, урпа 22 центнер, сĕлĕ 186 центнер сортланă. Халĕ колхозра пăрçаллă культурăсене сортлаççĕ.

Çавалкассинчи «Суттăлла» колхозра ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Колхозра ку тĕлĕшпе тимĕрçĕсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Çак кунсенче кунта ялхуçалăх машинисене йăлтах юсаса çитереççĕ. Вăрлăх фончĕсене çителĕклĕ таран хатĕрлесе, сортласа хунă.

Çĕньял Явăшри «Çĕньял» колхозра та колхоз председателĕ Федоров юлташ çуракине хатĕрленес ĕçе лайăх организациленĕ. Колхозăн 62 гектар çине сĕлĕ, 40 гектар çине пăрçаллă культурăсем акса хăвармалла. Çав çĕр лаптăкĕсем çине акмалли культурăсен вăрлăхĕсене хатĕрлесе çитернĕ. Ялхуçалăх машинисене юсама тытăннă.

Кӳлхĕрринчи «Трактор», Элменри Пушкин ячĕпе тăракан колхозсенче те вăрлăхсене сортлас тата ялхуçалăх машинисене юсас тĕлĕшпе хĕрӳллĕ ĕç пырать.

Çак вăхăтрах хăшпĕр колхозсем çуракине хатĕрленме тивĕçлĕн тытăнманха. Сăмахран, Туçи Кăканарти «Правда», Анат Карачурари «Социализм çулĕпе», Кивçурт Мăратри «Хĕрлĕ Çăлтăр», Мăн Хирлепри «Строитель», Авăрçырмари «Дружба» колхозсенче вăрлăх фондне те хывса хăварман.

Çавнашкалах ялхуçалăх машинисене юсасси те япăх пырать. Районра юсама кирлĕ 1750 плугран — 203 плуг, 100 сеялкăран — 23 сеялка юсанă, Аçăм Çырмари «Коминтерн» колхозра 75 плуг юсамалла. Паянхи куна пĕрре те юсаман.

Юр тытас плана районри колхозсем 8 процент, уя тислĕк кăларассине 22 процент çеç тултарнă (планпа 45 пин тонна кăлармалла). Кунсăр пуçне 40 пин тонна торф, 2800 центнер кĕл тата ыттине те хатĕрлесе уя кăлармалла, анчах вырăнти çак удобренисене хатĕрлеме тытăнман та.

Çуракине хатĕрленмен колхозсен халех акана хатĕрленме тытăнмалла, лайăх ĕçлекен колхозсемпе танлашмалла.

**Т. БЕЛОВ.**

# Куллен кирлĕ таварсене ытларах тумалла

ÇĔРПУ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви туса кăларакан кустпромартельсемпе мастерскойсем районра сахал мар. Чăваштарпромсоюз системине кĕрекен промартельсем Апаккассинче, Хурăнсурта тата Туçире пур. Вĕсем чăпта çапаççĕ, вĕрен яваççĕ, çуна, урапа тата ытти те туса кăлараççĕ. Çавăн пекех Чăвашшвейпромсоюз системине кĕрекен профтехшкул, Чăвашпромсоюз системине кĕрекен «Перламутр» фабрики, райпромкомбинатпа райпищекомбинат пуçа тата урана тăхăнмалли япаласем, тата урапа сĕрмелли маç, çилĕм, супăнь, тăм чӳлмексем тума пултараççĕ. Ытти таварсене — сĕтел-пукан, корзинкăсем туса кăлармалли условисем те районра çителĕклĕ.

Хурăнсурти кустпромартелĕн кăçал мунчаларан сумкăсем 3 пин тенкĕлĕх, вĕрен 8.400 тенкĕлĕх, Апаккассинчи кустпромартелĕн — вĕрен, çуна, урапа кустăрми тата ытти те, профтехшкулăн — тĕрлĕрен япаласем 190 пин тенкĕлĕх туса кăлармалла. Çавăн пекех районри ытти предприятисен те тĕрлĕрен таварсем чылай туса кăлармалла.

Вĕсен çакна тума майсем çителĕклĕ. Йывăç, мунчала, хăва, тăм ытлашшипех тупма пулать. Профтехшкулта та тĕрлĕрен татăк-кĕсĕксем нумай юлаççĕ, анчах та, вырăнти чĕртавартан туса кăларнă таварсем хулари магазинсенче те, пасарта та çук. Мĕншĕн тесен вырăнти организацисем вырăнти промышленноçа аталантарассишĕн кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. Çавна пула ĕнтĕ кустпромартельсемпе предприятисем хăйсем мĕн пама пултарнинех параймаççĕ.

Райпромкомбинатăн кăçал 140 пин литр вырнаçмалăх тăмран тĕрлĕрен савăт-сапасем туса кăлармалла. Комбината тума 1940 çулти август уйăхĕнчех тытăннă, анчах халĕ те туса пĕтерсе ĕçе яман, оборудованисене вырнаçтарса çитермен.

Профтехшкулпа «Перламутр» фабрикин ĕçлеме пур условисем те çителĕклĕ пулин те, куллен кирлĕ таварсене кăларма тытăнман.

Апаккассинчи, Хурăнсурти тата Туçири кустпромартельсем тĕрлĕрен сăлтавсемпе хăйсен производство программисене тултарса пыраймаççĕ. Çавна пула çак артельсем куллен кирлĕ таварсем çителĕклĕ таран кăлараймаççĕ.

Кустпромартельсемпе предприятисен партипе правительствăн 1941 çулти январĕн 9-мĕшĕнче йышăннă постановленине тыслăн пурнăçласа пырса, вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви ытларах та ытларах туса кăлармалла.

**Г. ПЕТРОВ**

# Стахановла бригадăсем

ÇĔМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Древкомбинатри стахановецсемпе стахановкăсем ĕçре кулленех çĕнĕ çитĕнӳсем туса пыраççĕ. Вĕсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлнă.

Прокопьев юлташ ертсе пыракан цехри Ширяков юлташ бригади декабрь уйăхĕнче нормăна ялан 2,5 хут ирттерсе тултарнă. Бригада членĕсем çĕнĕ çула çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе паллă тунă.

Халĕ бригада татах та пысăкрах хастарлăхпа ĕçлет. Кунта икшер нормăран кая тултарса пыракансем çук. Вăтамран илсен, бригада çак уйăхра кашни кунах хăйне панă заданисене 2,5—3 хут ирттерсе тултарса пырать.

Шустов юлташ ертсе пыракан цехра двухсотниксемпе трехсотниксем вуншарăн шутланаççĕ, вĕсен йышĕ ӳссех пырать. Мастер Курков юлташăн бригадинче те нормăна тултарайманнисем çук. План тăрăх ку бригадăра 30 çын ĕçлемелле пулсан, халĕ 14 çын ĕçлесех хăйсене панă плана ик-виçĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

Çак цехри Купцов, Нефедьев юлташсен бригадисем те çак уйăхра начар мар результатсем кăтартаççĕ. Çĕнĕ çула кĕнĕ хыççăн малтанхи эрнерех вĕсенчен кашни плана икĕ хут ирттерсе тултарчĕ.

Чижиков юлташ комбинатра чылай вăхăт хушши столяр пулса ĕçленĕ. Нумаях та пулмасть ăна бригадира куçарчĕç. Чижиков юлташ хăйне шанса панă ĕçе начар мар пурнăçласа пырать. Кĕске вăхăт хушшинчех унăн бригадинчи рабочисем технологи процесне вĕренсе çитрĕç. Халĕ бригада плана ытлашшипех тултарса ĕçлет. Уйрăмăнах Куликов, Садовников, Тяпкин юлташсем ĕçре паха результатсем кăтартаççĕ.

# Тискер кайăксен юнлă йĕрĕсем

Пирĕн чаçсем халăх пурăнакан çĕнĕрен çĕнĕ пунктсене нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларса, малалла куçса пыраççĕ. Халăх хăйне ирĕке кăларакансене хаваслăн кĕтсе илет. Нимĕç çынçиенĕсем тунă тискер кайăкла ĕçсем ытларах та ытларах палăрса пыраççĕ. Германи войскисем вăхăтлăха йышăнса илнĕ районсенче пур çĕрте те гитлерла вояксем васкаса тарнин йĕрĕсем курăнаççĕ: ялсенчи урамсенче танксене хирĕç пемелли тупăсем, минометсем, ещĕкĕ-ещĕкĕпе снарядсем йăваланса выртаççĕ, продовольстви склачĕсем, карттăсем, çырусем, документсем тĕл пулаççĕ.

Фашистсем, 3 уйăх хушши хуçаланса, хăйсем йышăнса илнĕ ялсене вараласа, çаратса хăварнă.

Акă фашистсем тухса тарас умĕн çунтарса яма ĕлкĕреймен ял. Пур çĕрте те нимĕç вандалĕсем тискерленнин юнлă йĕрĕсем палăраççĕ: пахчара çунса пĕтсе кайнă 4 виле выртать. Нимĕçсем пирĕн аманнă боецсене тыткăна илнĕ те бензин сапса çунтарса янă. Юнашар çуртра тискер кайăкла асаплантарса вĕлернĕ татах 7 красноармеецăн виллине тупнă.

Юрьево ялĕнче фашистсем Константин Арсеньевич Попов колхозникне унăн ывăлĕ партизана кайнăшăн персе пăрахнă. Хресчен хĕрарăмне Елизавета Афанасьевăна хурăн хуллипе 25 хут çапнă. Ăна хĕненине курмашкăн ялти пур çынсене те хăваласа пухнă.

Тараканово ялĕнче пурăнакан çынсем хăйсен япалисене пахчасенче çĕр айне пытарнă пулнă. Нимĕçсем пахчасене минăсем лартса тухнă та вĕсен çийĕпе пралук картасем тытнă. Унтан вĕсем хресченсене япалисене илмешкĕн минăсем лартнă вырăна хăваласа кĕртсе янă. Мария Степанова хĕрарăма мина çурăлса кайса сирпĕнтерсе янă та, вăл пралук çине çакланса ларнă. «Пăхăнманнисем пурте çавăн пек вилĕмпе вилĕç»,—тенĕ нимĕç бандичĕсем.

Полыгино ялĕнчи колхозница Аграфена Ивановна Зотова, пирĕн чаçсем тăнă вырăна тарса тухнăскер, январĕн 3-мĕшĕнче çакăн пек картинăна курнă: нимĕçсем çарамаслантарнă пирĕн боецсене çуна çине лартнă та урам тăрăх илсе пынă. Çуна çинчех шыв пичĕки пулнă. Фашистсен тискер кайăкла ирсĕрĕсем пăр пек сивĕ шыва сыхса лартнă çынсен çурăмĕсем çине, çыннисем пăр статуйăсем пек пулса тăричченех ярса пынă.

Тыткăна лекнĕ хăшпĕр красноармеецсен лагерьтен тарса тухма май килнĕ. Вĕсем хăйсене кашни кунах асаплантарса, вăраххăн вĕлерсе пыракан тискер кайăксен чĕрни айĕнчен сăлăнса тухнă. Вĕсем çине, çак асапланса, сусăрланса, аманса пĕтнĕ çынсем çине пăхма та хăрушă.

«Эпир нӳрлĕ те сивĕ землянкăсенче пурăнтăмăр, — тесе каласа парать Роберт Савченко. — Çĕрле кĕске вăхăтлăха тĕлĕрсе илнĕ хыççăн, ир енĕпе пире патаксемпе хĕнесе тăратчĕç те, револьверсемпе хăратса, иртен пуçласа çĕрлеччененех каторгăри пек йывăр ĕçсем тутаратчĕç. Кăнтăрлапа çĕрулми хуппинчен пĕçернĕ шӳрпе текен мăшкăлтăк шыва çитеретчĕç, çунтан вара, халран кайнăскерсене, вĕлерес патне çитичченех хĕнесе, сивĕ çĕре йывăр ĕç тума хăваласа каятчĕç».

Минино ялĕнче пĕр сарай патĕнче нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсем хăйсен килĕсене яма хатĕрлесе хунă посылкăсем выртаççĕ. Посылкисем пысăкскерсем: кашниех икшер-виçшер пăт туртаççĕ. Типтерлĕ пуçтарса çыхнă, çиелтен хресченсен пирĕпе чăрканă. Икĕ посылки çĕмĕрĕлсе кайнă. Вĕсен ăшĕнче ача-пăчасен пальтисем, хĕрарăм юбкисем, пуç тутрисем, платьесем, хресчен пирĕн татăкĕсем, ачапăча теттисем курăнаççĕ. Посылкăсене ямалли адрессем: Берлин, Мюнхен, Дортмунд. Мародерсемпе пусмăрçăсен çав посылкăсене килĕсене ярса пама май килмен. Мерзавецсене Хĕрлĕ Çарăн яла çĕмĕрсе кĕнĕ боецĕсем пĕтерсе тăкнă. Çынвĕлеренсем, çынçиенсем, кантăк пек хытса кайнă куçлăскерсем, хытса ларнăскерсем, хускалманскерсем, красноармеецсен пульли тĕл тивнипе шăтса пĕтнĕскерсем, хӳме çумĕнче выртаççĕ. Пирĕн çĕршыва çаратса хĕн кăтартакан пур нимĕç оккупанчĕсем те çакăн пек вилĕм тупĕç.

**А. ИСБАХ.**

(**«Правда», январĕн 23-мĕш**).

# Советăн тыткăна лекнĕ çыннисене асаплантарни

ВАШИНГТОН, январĕн 23-мĕш. (ТАСС). Норвеги миссийĕ илнĕ сведенисем тăрăх, тыткăна лекнĕ красноармеецсене халĕ Ваарт хулинче пачах та вут хутса ăшăтман складсенче вырнаçтарнă. Вĕсен тумтирĕсем çĕтĕлсе пĕтнĕ, нумайĕшĕсен урана тăхăнма нимĕн те çук.

Илнĕ сведенисем тăрăх, гитлеровецсем тыткăна лекнĕ 100 çынна ирĕксĕр ĕçлеттерекен ĕçе кайма килĕшменшĕн персе пăрахнă.

Çав сведенисем тăрăхах, советăн тыткăна лекнĕ çыннисем валли лагерьсем Ставангерпа Тронхейм хулисенче тунă. Норвегири пур лагерьсенче те тыткăна лекнĕ совет çыннисене хĕнеççĕ, выçăпа асаплантараççĕ.

# Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçă

ЛОНДОН, январĕн 23-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви январĕн 23-мĕшĕнче кăнтăрла кăларнă коммюникере çапла каланă: иртнĕ каçхине Англи бомбардировщикĕсем Мюнхенри объектсем çине вĕçсе кайса тапăннă. Вăйлă пушарсем тухнă. Англи самолечĕсем каялла таврăннă чухне те пушарсем çаплах сӳнмен. Противникăн Голландири аэродромĕсем çине те бомбăсем пăрахнă, çавăн пекех Дюнкеркри доксене те атакăланă. Пирĕннисем противникăн шывĕсенче минăсем лартнă. Англи истребителĕсем противникăн Çурçĕр Францири аэродромĕсем çине вĕçсе кайса тапăннă. Сыранри авиацин самолечĕ противникăн грузсем турттаракан судни çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем судно çине тĕл ӳкнине палăртнă. Çак операцисенчен Англин икĕ бомбардировщикĕ каялла таврăнман.

Январĕн 22-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англин хĕвелтухăç çыранĕсем çывăхĕнче противникăн пĕр самолетне пĕтерсе тăкнă.

# Ливири вăрçă

ЛОНДОН, январĕн 23-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: тăшманăн январĕн 21-мĕшĕнче Мис-Берг патĕнче хĕвелтухăç еннелле куçма пуçланă колонни январĕн 22-мĕшĕнче ирхине малалла куçса пынă. Вĕсене Германипе Италин авиацийĕ хыçран питĕ вăйлăн хӳтĕлесе пырать. Каç еннепе Англин мобильнăй чаçĕсем Аджедабирен хĕвелтухăç еннелле чакнă Аджедабине татах противник йышăнса илнĕ.

Кун каçиччен Англи авиацийĕпе артиллерийĕ темиçе вырăна ăнăçлăн атакăланă. Сăмахран, противникăн Аджедабирен кăнтăр-хĕвелтухăç еннерех пухăнса тăнă автотранспорчĕ çине бомбăсем нумай пăрахнă, пулеметсенчен пенĕ. Противника пысăк çухатусем кӳнĕ.

# Лăпкă океан çинчи вăрçă

ФИЛИППИНРА Япони войскисем Батаан çурутравне атакăлани ăнăçлă пулман. Америкăпа Филиппин войскисем вĕсене хăйсене хĕсме пуçланă. Çав войскăсем, хăюллăн çапăçса, Японин войскисене каялла сирсе янă та фронтăн малтанхи линине йышăнса илнĕ. Фронтăн вăтам пайĕнче Япони войскисем малтан пĕчĕк çĕнтерӳсем тунă пулнă. Анчах та Америкăпа Филиппин войскисем японецсене хирĕç çийĕнчех контратака туса кĕрсе кайнă та хăйсен малтанхи позицийĕсене пурне те йышăнса илнĕ, противника йывăр çухатусем кӳнĕ. Америкăпа Филиппин çарĕсен çухатăвĕсем пысăк мар.

МАЛАЙĂРА японецсем хăйсен тĕп наступленине, Муар юханшывĕнчен пуçласа, Англин çурçĕрелле те, кăнтăралла та каякан коммуникацийĕсем çинелле туса пыраççĕ. Вĕсем Муар юханшывĕнчен кăнтăр-хĕвелтухăçнелле пыракан çул тăрăх хытă хĕсеççĕ. Малайăн хĕвелтухăçĕнчи çыранĕсенче çапăçусем Букит—Пайонг районĕнче пыраççĕ.

Япони авиацийĕ, январĕн 21-мĕшĕнче Сингапур çине вĕçсе пырса тапăнса, 287 çынна вĕлернĕ, 529 çынна амантнă. Январĕн 22-мĕшĕнче Япони самолечĕсем Сингапур çине çĕнĕрен тапăнма пăхнă, анчах вĕсене Англи истребителĕсем чарса лартнă, вĕсем сывлăшри çапăçура японецсенне пилĕк самолетне çапса антарнă.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔНЧЕ Япони авиацийĕ темиçе пункт çине бомбăсем пăрахнă, пулеметсенчен пенĕ. Пуринчен ытларах Япони самолечĕсем хăйсен активлăхне Суматра утравĕн çурçĕр пайĕнче палăртнă. Материаллă ишĕлӳсем нумай мар. (**ТАСС, январĕн 23-мĕш**).

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

**РЕДАКЦИ АДРЕСĔ:** г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. **ТЕЛЕФОНСЕМ:** редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 6—88, çырусемпе рабоселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 633 Типография №1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф. 6. 58 84 п. л.